Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТАБĔР 23 ВЫРСАРНИКУН
245 (5058) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Комсомолăн отчочĕсемпе суйлавĕсене йертсе пымала

Октаберĕн 15-мĕшĕнче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче отчотсемпе суйлавсем пуçланчĕç. Комсомолĕцсем хăйсен комитечĕсен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ, çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклеççĕ, çитес вăхăт валľли ĕç программисем палăртса хураççĕ, ĕçре хăйсен пултарулăхĕсене кăтартнă çынсене йертсе пырас ĕçе суйлаççĕ.

Кăçалхи суйлавсем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă вăхăтра тата комсомол докуменчĕсене улăштарас умĕн пулса иртеççĕ. Йубилейа тата отчотсемпе суйлавсене иртерме хатĕрленнĕ май комсомолĕцсемпе комсомолкăсен ĕçри активлăхĕ пысăккăн ÿсрĕ. Комсомолĕцсемпе совет çамрăкĕсем ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа тăван çĕршыва-аннемĕре чыслă парнесем пара ççĕ. ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ тухнă май комсомолĕçсен вĕренес хастарлăхĕ вăйланчĕ. Парти исторйн сталинла учебникĕ марксисăмленинисăм теорийĕпе хĕçпăшаллама комсомолĕцсем валľли пысăк май уçса пачĕ.

Йулашки вăхăтра Ленинла-Сталинла комсомол ретне совет çамрăкĕсен малта пыракан представителĕсенчен çĕнĕ вăй хутшăнчĕ. 1938 çулта Чăваш республикинче çĕнĕрен 232 пуçламĕш организаци тунă.

Çаксем вĕсем кашни комсомол организацине çитес кĕске вăхăтрах çирĕплетме, унăн ĕçĕсене тата çÿлĕрех пусăма çĕклеме май пара ççĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ комсомол организацин пурнăçĕнче пысăк событи пулса тăрать. Ăна пур йенчен те тĕплĕн хатĕрленсе иртермеле. Анчах чылай районсенче çак ĕçе тивĕçлипе йертсе пыман пирки пысăк çитменлĕхсем, суйлав инструкцине пăснисем пулнă. Йĕпреç районĕнче малтанхи виçĕ кун хушшинче туса иртерме палăртнă отчотпа суйлав пухăвĕсем 7 пуçламĕш организацире пулса иртеймен. Шупашкар районĕнче комсомол райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацире çырса хатĕрленĕ отчот пулман, райфинпай çумĕнчи пуçламĕш организацире комитет çекретарĕпе унăн заместителне вăрттăн сасăласа суйланă. Шупашкарти 4-мĕш номĕрлĕ шкул çумĕнчи комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕнче кандидатсене сÿтсе-йавачченех шутлав комиççине суйласа хунă. Шупашкар районĕнчи МТС çумĕнчи комсомол организацинче комсомолĕцсене пĕлтермен пирки пуху вăхăтра пулса иртеймен.

Çакнашкал çитменлĕхсемпе йăнăшсем вĕсем пĕтĕмпех комсомол райкомĕсем тата ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ отчотсемпе суйлавсене иртерес ĕçе тивĕçлипе йертсе пыманнинчен килнĕ. Отчотсемпе суйлавсем пуçланни пĕр ерне ытла ĕнтĕ, анчах Турханпа Вăрнар районĕсене комсомол обкомĕн представителĕсем пайан кунччченех пырса курман-ха.

Комсомол райкомĕсем чылай вырăнсенче пуçламĕш организацисене представителсем йарса пулăшмаççĕ. Комсомолăн Çĕрпÿ райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организацире хăйĕнче те отчотпа суйлав пухăвĕ критикăпа самокритикăсăр пулса иртнĕ. Шупашкар хула комитечĕ хăйĕн представителĕсене пĕр кунта икĕ организацине йама тата пĕр пуçламĕш организацинче отчотпа суйлав пухуне иртерме икĕ срук палăртса хунисем пулнă.

Комсомолăн Тутаркас тата Улатăр райкомĕсем отчотпа суйлав пухăвĕсем мĕнле иртсе пынине те пĕлмеççĕ.

Комсомол организацисене отчотпа суйлавсене иртерес ĕçре парти организацийĕсем пулăшса пымала. Комсомолĕцсемпе çамрăксене коммунисла воспитани парасси парторганизацисен пысăк задачĕсенчен пĕри пулса тăрать. Анчах хăшпĕр вырăнсенче парти организацийĕсем комсомола çителĕклех пулăшса пымаççĕ. Кăна Шупашкарти типографинчи комсомолĕцсем хăйсен отчотпа суйлав пуххинче палăртрĕç. Йулашки вăхăтра типографинчи комсомол организацин ĕçĕ йапăхса кайнă пулнă, анчах парторганизаци çакна курса тăрсах ĕçе лайăхлатса йарас тĕлĕшпе çителĕклĕ пулăшу паман.

ПСК(б)П Канаш райкомĕ комсомол организацисенче отчотпа суйлав иртерес ĕçре пулăшма пĕр коммунис та уйăрса паман. Йĕпреç районĕнчи Кľашĕвĕра комсомол пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухуне комсомол райкомĕн представителĕ Маргинăв йулташ пыманнипе пухăва туса иртереймен.

Комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен отчочĕсемпе суйлавĕсене иртерес ĕçре малтанхи кунсенче пулнă йăнăшсене, суйлав инструкцисене пăснисене кĕске вăхăтрах пĕтермеле.

Комитет çекретарĕсемпе комсоргсен отчочĕсене тата вĕсене сÿтсе-йавассине идейăла пысăк çÿллĕшре, болľшевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарса йанипе иртермеле. Отчотсене хатĕрлес тата сÿтсе-йавас ĕçе кашни активиса, кашни комсомолĕца хутшăнтармала. Суйлавсене ПСÇЛКС Тĕпкомĕн инструкцийĕ тăрăх иртерсе, йертсе пырас ĕçе социалисăм строителствинче, халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçре паларнă çынсене суйласа хăвармала. Комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсенче хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартнă комсомолĕцстаханăвĕцсем—рабочисем, колхозниксем, служăшчисем, интеллигентсем пулмала. Вĕсем Ленин — Сталин партин ĕçне вĕçне çитиех сыхлама пултаракан çынсем пулмала.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче комсомол ĕçне вăйлатма пулăшакан конкретлă решенисем йышăнмала. Вăл решенисем комсомолĕцăн револľуцилĕ сыхăлăхне ÿстермеле, комсомол ретĕнче, социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисенче хĕсĕнсе йулнă халăх тăшманĕсене тата вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме мобилизацилемеле.

Парти организацийĕсем комсомол организацийĕсене хăйсен ĕçĕнчи пысăк опытсем тăрăх вĕрентсе, отчотсемпе суйлавсене иртерме пулăшса пымала. Партком çекретарĕсем, парторгсем тата уйрăм коммунисcем комсомолĕцсен пухăвĕсенче активлăн хутшăнса ĕçлемеле. Отчотсемпе суйлавсене лайăх пахалăхпа иртерсе, комсомол организацийĕсене нихăçанхинчен ытларах çирĕплетмеле.

Венгрири фашиссен бандисем Чехословаки территори çине тапăнаççĕ

ПРАГĂ, октаберĕн 21-мĕш (ТАСС). Венгри Словакипе Закарпат Украини территорийĕ çине каçарса йаракан хĕçпăшаллă бандăсен ĕçĕ йулашки кунсенче чылай вăйлăланнă. Венгри территорийĕ çинче организацилесе хĕçпăшаллантарнă 130 çынран тăракан бандă çак кунсенче чикĕ урлă каçнă, пуйăса тытса чарса машиниса вĕлернĕ, пассăжирсене çаратса тухнă, чукунçул релľсисене сÿтсе пăрахнă. Бандăна Мукачево хулинчи вокзала тата Подгорианăри чукунçул кĕперне çĕмĕрсе тăкма задани панă пулнă, анчах вăл заданине пурнăçа кĕртме ĕлкĕреймен, мĕншĕн тесен ăна Чехословаки çарĕсен чаçĕсем арĕсленĕ. Октаберĕн 18-мĕшĕнче Закарпат Украинин территорийĕ çине 1000 çын каçса кĕнĕ. Вĕсем пулеметсемпе, винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă пулнă, вĕсен аллинче тата сиктерсе сирпĕтмели йапаласем пулнă. Вĕсемпе Чехословаки чаçĕсем хушшинче тытăçу пулса иртнĕ, пĕрпĕрин çине персе тăнă хыççăн аманнисемпе вилнисем те пулнă. Çак бандăна пĕтĕмĕшпе пекех тыткăна илнĕ, вĕсене часах суд умне тăратаççĕ.

Чехословаки правителствин аллинчи материалсем кăтартса панă тăрăх, Венгри территорийĕ çинче, Чехословакипе чикĕлĕ районсенче, Чехословаки территорийĕ çине каçса тапăнма йатарласах отрйадсем организацилеççĕ. Отрйадсене тумтир тата хĕçпăшал параççĕ, çар ĕçне вĕрентеççĕ. Словакипе Закарпат Украини чиккисем çывăхĕнче çав отрйадсенче тăракан çынсем вунă пине йахăн шутланаççĕ.

(ТАСС).

Судет-Нимĕç районĕсенче фашисăма хирĕçле выступленисем

Германи çарĕсем кĕрсе йышăннă Судет-Нимĕç районĕсенче фашисăма хирĕçле выступленисем пит анлăн сарăлса кайнă, вĕсем çинчен калакан çведĕнисем Германи хаçачĕсенче те пичетленеççĕ. Октаберĕн 21-мĕшĕнче Германири хаçатсен Судет-Нимĕç районĕсенчи чылай выступленисем çинчен ирĕксĕрех йатарласа çырнă статйа пичетлесе кăлармала пулса тăнă. Пысăк выступленисенчен пĕри Айсковиц-Шелеховиц йатлă вырăнта пулса иртнĕ, унта восстани çĕкленĕ çынсем фашиссен свастикăлă йалавне çурса пăрахнă.

Восстани çĕкленисемпе Германи полицейскийĕсем хушшинче (полицейскисем пулеметсемпе тата карабинсемпе хĕçпăшалланнă пулнă) çапăçу пуçланса кайнă, çапăçура 5 çын вилнĕ тата темиçе çын аманнă. Фашисла Германи туртса илнĕ ытти районсенче те тытăçусем, пысăк выступленисем пулса иртнĕ. Восстани çĕкленĕ çынсем фашиссен йалавĕсене çура-çура пăрахнă, телефонлă çыхăнăва çĕмĕрнĕ, арĕсленĕ çынсене кĕске вăхăтрах ирĕке кăларма ыйтнă. Германи влаçĕсем вăл районсене полиципе штурмовиксен пысăк отрйачĕсене кăларса йанă.

Гитлĕр Судет-Нимĕç районĕсене иккĕмĕш хут тухса кайнă.

(ТАСС).

Чехире тата Моравире компартийе ĕçлеме чарса лартнă

Берлинран хушнă тăрăх, Чехословаки правителстви çĕршывра фашисла йĕрке туса пырать. Чехипе Моравин территорийĕ çинче коммунисла партийе ĕçлеме чарса лартасси çинчен тата коммунисла хаçатсемпе журналсем кăларма чарасси çинчен официалľнăй распорйажени пичетлесе кăларнă. Коммунисла парти комитечĕсемпе коммунисла хаçатсен редакцийĕсен пурлăхĕсене конфискацилеççĕ.

Çапла вара, республикăн пĕтĕм территорийĕ çинче (Закарпат Украинисĕр пуçне) коммунисла партийе ĕçлеме чарса лартнă.

Прагăран: парламентри коммунисла депутатсене мандатсемсĕр тăратса хăвараççĕ, тесе пĕлтереççĕ.

Правителствă çапла тунишĕн фашисла пичет уççăнах саванать.

(ТАСС).

Чехословаки республики 20 çул тултарнине уйавламала мар тунă

Чехословаки правителстви йышăннă постановлени тăрăх, Чехословаки республики пуçланнăранпа 20 çул тулнине уйавламала мар тунă. Октаберĕн 28-мĕшĕ—республикă 20 çул тултарнă кун ĕçлемели кун пулать, тесе пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Германин Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн процесĕ

Германин Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штачĕсенчи шпионла центрĕ пирки пыракан процесра, октаберĕн 20-мĕшĕнче, айăпланакан Румрих „Германи шпионĕсене ССР Союзне ăсатас ĕçре усă курма“ Америкă паспăрчĕсен 50 бланкне тупма хăтланни çинчен тĕплĕн каласа панă, çавăн пекех тата хăйĕн шпионла „ĕçĕнчи“ ытти епизодсем çинчен тата вăл „ĕçе“ айăпланакан Гофман хутшăнса „ĕçлени“ çинчен каласа панă. Гофман, кăтартусем парса, хăйĕн шпионла ĕçĕ çинчен тата айăпланакан Шľутер тата Германийе тарнă Грибл шпионла ĕçсем туни çинчен каласа панă.

(ТАСС).

Болгарире массăлă арĕссемпе ухтарусем

Болгари генералľнăй штаб началľникне Пейев генерала вĕлерне хыççăн, Софире (Болгари) ухтарусем тăваççĕ тата çынсене нумай арĕслеççĕ. Швейцари хаçачĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, арĕсленĕ çынсен хисепĕ виçĕ пинрен те иртет. Арĕсленисен хушшинче парламентăн демократла депутатсен ушкăнĕнче пулнă министрсем темиçе çын, журналиссемпе оппозицилĕ пичетсенче тата демократла организацисенче ĕçленĕ çынсем нумай.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Кăнтăр Китайра, Боло патĕнчен хĕвеланăç йенче, хайар çапăçусем пыраççĕ. Вăл вырăнта Китай çарĕсен оборонин тĕп линийĕсенчен пĕри вырнаçса тăрать. Йапонĕцсем Кантон çинеле темиçе колоннăпа наступлени туса пыраççĕ, вĕсен тĕп вăйĕ Боло районĕ çине тапанать. Октаберĕн 19-мĕшĕнче йапонĕцсем Китай оборонин малти линине татса кĕме темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах усăсăр. Йапонин уйрăм отрйачĕсем малала тапăнса кĕрсе, Кантонран 30—35 километрти пунктсем патне çывхарнă.

Китай авиацийĕ Боло, Вейчжоу тата Тамшуй районĕсенче Йапонин пĕр çĕре пухăнса тăракан çарĕсем çине бомбăсем пăрахса, вĕсене пысăк инкексем кÿрет. Китайăн çÿлеле перекен артиллерийĕ Йапонин икĕ бомбовозне персе антарнă.

Центр Китайра Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ çинче йапонĕцсем хĕвеланăç йеннеле, Кантон-Ханľкоу чукунçулĕ патнеле куçса пыраççĕ.

Синľйан районĕнче (Ханľкоуран çурçĕр йенче) Лľулийран кăнтăр йенче пысăк çапăçусем пыраççĕ.

Йапони авиацийĕ çынсем пурăнакан пунктсем çине хайаррăн бомбăсем пăрахать. Октаберĕн 19-мĕшĕнче йапонĕцсем Чанша тата Пинцзйан хулисем çине бомбăсем пит нумай пăрахнă. Чаншара аманнисемпе вилнисем 300 çын шутланаççĕ, унтах 400 çурт тĕпренех арканнă. Йапонĕцсем Пинцзйан çине пулеметсенчен пенĕ. Аманнисемпе вилнисем 600 çын шутланаççĕ.

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусенче икĕ хут аманнă политрук П. А. Ушаков йулташ сывалса госпиталľрен тухнă чухне медицинă сестрине Женľă Дзйубиче аманнă красноармейĕцсене лайăх пăхнăшăн тав тăвать.

„Правда“ спецкорĕн В. Томинăн фотоÿкерчĕкĕ. („Прессклише“).

Совет морйакĕсем Норвеги карапĕн екипажне çăлнă

„Турксиб“ пăрахут Америкăран Ленинграда таврăннă. Октаберĕн 20-мĕшĕнче çĕрле унăн команди Ленинградран 280 милĕре путма пуçланă карапа курнă. Вăл Норвеги пăрахучĕ „Бимс“ пулнă. Тинĕс çинче 8 баллă шторм туллашса тăнă. Вăйлă хумсем путакан карапа хытă тайăлтарнă.

Совет морйакĕсем „Бимс“ екипажне пулăшма кайнă. Калама çук йăвăр условисенче Норвеги морйакĕсене пурне те (30 çынна) „Турксиб“ çине куçарнă.

Вилĕмрен хăтарнă Норвеги морйакĕсене лайăх условисем туса панă, вĕсене пĕтĕм екипаж туслă ăшă кăмăлпа пăхнă. Норвежĕцсем сывă, хаваслă. Октаберĕн 21-мĕшĕнче Норвеги морйакĕсене Естони портĕнче Таллинра антарса хăварнă. Хăйсене вилĕмрен хăтарнăшăн, тăрăшса пăхнăшăн вĕсем совет морйакĕсене хĕрÿллĕн тав тунă.

(ТАСС).

Чи лайăх бойецсемпе командирсем парти ретне кĕреççĕ

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн çарĕн баталľон комиссарĕ Самарин йулташ çар комиссарĕ пулса тăракан чаçĕнчи парти организацийĕ хăйĕн ретне чи лайăх бойецсемпе командирсене илсе ÿссе пырать. Кăçал 10 уйăх хушшинче коммуниссен парти ретне 89 çынна илнĕ. Çак октабĕр уйăхĕнче кăна парти членне тата кандидата илме 100 çын ытла заявлени панă. Вĕсем пурте çар службинчи отличниксем тата обшчĕствăлă ĕçре активлă ĕçлекенсем.

Парти ретне кĕнисенчен чылайĕшĕ халľ политруксем тата вĕсен заместителĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Красноармейĕц Божатков йулташ Хĕрлĕ Çара пырсанах пикенсе вĕренме тытăннă. Çар ĕçĕпе политикăна вăл отличнă паллăсемпе кăна вĕренсе пынă. Пĕлтĕр ăна правителствă „Знак Почета“ ордĕнĕ парса наградăланă. Кăçал йанвар уйăхĕнче Божатăв йулташ парти ретне кĕнĕ. Халľ политрукăн заместителĕ пулса ĕçлет.

Коммуниссемпе комсомолĕцсем бойецсене тата командирсене вĕрентес йенĕпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ. Çамрăк коммунис красноармейĕц Шаргунов йулташ ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа хăйĕн группинче „Комсомол граждăн вăрçи çулĕсенче“ тата „Комсомол социалисăм строителствинче хутшăнса ĕçлени“ темăсемпе икĕ калаçу туса иртернĕ.

(ТАСС).

Парти райкомĕн штатра тăман инструктăрĕсем

Партин Мускаври Советски райкомĕ штатра тăман инструктăрсене уйăрса, вĕсене ĕçре çирĕплетсе хăварас йенĕпе пикенсе ĕçлеме тытăннă. Нумай пулмасть парти райкомĕ парти кадрĕсен тата партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕсен йенĕпе 37 инструктăр çирĕплетнĕ. Халľ татах çак ĕçе çынсем уйăрма хатĕрленет.

Штатра мар инструктăрсем пулма партин практикăлă ĕçĕнче нумай çулсем хушши пулнă опытлă коммуниссене уйăрнă. Вĕсене кашнинех ик-виç пуçламĕш парторганизацисем çумне çирĕплетнĕ. Инструктăрсем ĕçе активлăн тытăннă.

ПСК(б)П Советски райкомĕ ĕçри паха опытсене пĕр-пĕрне парас шутпа уйăхра пĕрер хут инструктăрсемпе канашлу туса иртерме палăртнă.

(ТАСС).

Барселонăра троцкисла-фашисла бандă пирки пыракан процесра

Троцкисла-шпионла бандă процесĕнче прокурор сăмах каланă. Прокурор хăйĕн сăмахĕнче Испанире йулашки çулсенче пулса пыракан событисем çинчен анлă обзор туса панă. Испани халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнса тăмала мар пулассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн пур тапхăрĕсенче те ПОУМ организацийĕсем предателле ĕçсем туса пыни çинчен конкретлă фактсемпе кăтартса панă.

ПОУМ халăх фрончĕн правителстви çине тапăннă, çапăçура фашиссем республикăна çĕнтермеле тăвассишĕн уççăнах тăнă. Вăл çеç те мар-ха, поумăвĕцсем фашиссене уççăнах пулăшма пуçланă, вĕсем хăйсен хаçачĕсем çинче фашисла документсем пичетлесе тăшмана вăрçă çекречĕсене уçа-уçа панă.

ПОУМ сотрудникĕсем хушшинче гестапо агенчĕсемпе Итали охранкин агенчĕсем пулнă, вĕсем фашиссене сведĕнисем парас ĕçре ПОУМ радиостанцийĕпе усă курнă. Çакна ĕненмелех палăртнă: ПОУМ укçа-тенке тата хаклă йапаласене урăх çĕршывсене ăсатса тăнă, суйа укçасем туса республикă валľутине çĕмĕрсе пынă, контрреволľуцилĕ пăлхав тума урăх çĕршывсенчен хĕçпăшалсем кÿрсе килнĕ, ПОУМ халăх фрончĕн правителствине хирĕç çав пăлхава организациленĕ. ПОУМ Тĕпкомĕ хăйĕн вырăнти уйрăмĕсем патне пăлхав тăвасси çинчен приказ йанă, çав Тĕпком кăтартăвĕ тăрăх ПОУМ „дивизийĕ“ пăлхав вăхăтĕнче фронтран пăрахса кайнă. Фашисла генерал Кейпо де Лľйано: епĕ поумăвĕцсен контрреволľуцилĕ пăлхавне пĕтĕмĕшпех ырăлатăп, уншăн тăратăп, тесе каланă.

ПОУМ, — тенĕ прокурор, — вăл изменниксен уголовлă преступленисем тăвакан шпионла организаци. ПОУМ Тĕпкомĕ тăшмана сведĕнисем парса тăнă, йут çĕршывсенчи генштабсемпе тата разведкăсемпе çыхăнса тăнă, Франкона усă кÿрсе тăван çĕршыва хирĕçле ĕçсем туса пынă.

Айăпланакансем, — тенĕ йулашкинчен прокурор, — уголовлă преступленишĕн туллийĕнех ответ тытма тивĕç. Прокурор тăван çĕршыва сутакансене хăйар наказани пама ыйтнă.

(ТАСС).

Испанири ĕçсене хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн контролľорĕ—Германири концентрацилĕ лагĕрте

Октаберĕн 12-мĕшĕнче Германи витĕр тухса пынă вăхăтра Норвегин тинĕс служби капитанĕ Йакобсен çухалнă. Испанири ĕçсене хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен Лондăнри комитет Йакобсена Испанийе комитет контролľорĕ туса йанă пулнă. Халľхи вăхăтра Йакобсен хăйĕн тăванĕсене: мана Германири концентрацилĕ лагĕре хупса хучĕç, тесе пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

** Планран иртерсе государствăна панă çĕр мамăкĕшĕн Узбекистанри колхозсем 98.726 пин тенкĕ преми-надбавкă илнĕ. Республикăра мĕлйун тенкĕ йе унтан та ытларах преми-надбавкă илнĕ колхозсем нумай.

** Краснодар крайĕнчи колхозсенче дизĕлнăй моторлă тракторсем 229 шутланаççĕ. Çĕнĕ машинăсен пахалăхĕ пит аван. Кашни трактăрпа вăтамран 1.160 гектар суха тунă.

** Ростов облаçĕнчи „Новый путь“ йатлă йалхуçалăх ертелĕ çумĕнчи государствăн суртсене сăнакан участкă агрономĕ Заболоцкий йулташ халиччен пулман пысăк тухăçлă рис туса илнĕ. „Дункан“ йатлă сурт акнă участкăсем çинче вăтам шутпа гектартан 91-шер центнĕр, чи лайăх участкă çинче 115-шер центнĕр рис пухса илнĕ.

** Калинин облаçĕнчи колхозсем хĕрсех хĕллене хатĕрленеççĕ. Кăçалхи çул облаçри колхозсем çĕнĕрен 2.500 хуралтă туса лартнă.

■■ Октаберĕн 20-мĕшĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен Комитетĕнче дирижорсен пĕтĕм Сойузри конкурсĕнче çĕнтерне дирижорсене Е. А. Мравинскине, А.Ш. Мелик Пашайĕва, Н.Г. Рахлина, К.К Иванова тата М.И. Павермана премисем панă. Вăл конкурс нумайах пулмасть Мускавра пулса иртнĕ.

■■ Октаберĕн 19-мĕшĕнче Харькăври трактăр савăтĕнче 10 пинĕмĕш гусеницăлă трактăр туса кăларнă.

■■ Писател А.Н. Толстой çĕнĕ пйесă çырса пĕтернĕ. Пйесă фашисла режимран çивчĕ сатирăпа мăшкăлласа кулать, „расăлă теори“ тенине хăйаррăн тăрă шыв çине кăларать.

■■ Свердловскпа Пермь облаçĕнчи колхозсенче кирпĕчпе черепица тăвакан савăтсем 8 пин ытла шутланаççĕ. Частинск районĕнчи колхозсен савăчĕсем сезонра 300 пин кирпĕч ытла туса кăлараççĕ.

★ РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1938 çулти октаберĕн 20-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Хабарăвск крайĕн организацилĕ комитетне туса хунă.

Оргкомитет председателне С. И. Гусĕв йулташа çирĕплетнĕ.

★ РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1938 çулти октаберĕн 20-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Приморски крайĕн организацилĕ комитетне туса хунă.

Оргкомитет председателне С. И. Шабалин йулташа çирĕплетнĕ.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

IV-мĕш сыпăкăн малали

2. Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен*)

2) Марксисла философилĕ **материалисăм** çак тĕп паллăсемпе палăрса тăрать:

а) Тĕнче вăл—„абсољутнăй идейăна“, „тĕнче духне“, „ăстăна“ вырнаçтарса тăраканни пулать тесе шутлакан идеалисăма хирĕç-хирĕçле пулса—Марксăн философилĕ материалисăмĕ çакăн пек вĕрентет: тĕнче хăйĕн природипе **материаљнă**, тĕнчери нумай тĕрлĕ йавленисем куçса пыракан материн тĕрлĕ тĕслĕхĕсем пулаççĕ, йавленисен диалектикăлă метод кăтартса панă пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвĕ тата вĕсем пĕр-пĕринчен килсе тăни куçса тăракан матери аталанăвĕн саккунлă йĕркелĕхĕ пулса тăрать, тĕнче матери куçса тăнин саккунĕсем тăрăх аталанса пырать, ăна нимĕнле „тĕнче духĕ“ те кирлĕ мар.

„Материалисăмлă мировоззрении, тет Енгĕљс, природă хăй мĕнле, ăна çаплипех, айакран нимĕн илсе хушмасăр ăнланмалине пĕлтерет“ (**К. Маркс и Ф. Энгельс**, т. XIV, стр. 651).

Авалхи философ—Гераклит: „пуринпе те пĕрлĕхлĕ тĕнчене турăсенчен никам та, çынсенчен никам та туман, вăл саккунлă йĕркелĕх тăрăх çулăмланакан, саккунлă йĕркелĕх тăрăх сӳнекен, ĕмĕрех чĕрĕ вут-хĕм пулнă, халĕ те çавăн пекех, малашне те çавăн пекех пулĕ“ тенĕ материалисăмлă шухăшсене асăнса, Ленин калать: „Диалектикăлă материалисăмăн пуçламĕшсене питех те лайăх çырса кăтартнă“ (**Ленин**, „Философские тетради“, стр. 318).

б) Пирĕн ăстăн анчах чăннипе пур тесе, материаљнăй тĕнче, бытийе, природă пирĕн ăстăнра, пирĕн туйăмсенче, шухăшсенче, ăнланусенче кăна пурăнать тесе калакан идеалисăма хирĕç-хирĕçле пулса,—марксисла философилĕ материалисăм çакăн пек вĕрентет: матери, природă, бытийе ăстăн тулашĕнче, ăстăнран килсе тăман обйективлă реаљнăç пулса тăрать, матери—малтанхи, мĕншĕн тесен вăл туйăмсен, шухăшсен, ăстăнăн çăлкуçĕ пулса тăрать, ăстăн—кайранхи, материрен тухса пулаканни, мĕншĕн тесен ăстăн матери сăнне кăтартса тăраканни, бытийе сăнне кăтартса тăраканни пулать, шухăш вăл хăйĕн аталанăвĕнче лайăхланса çӳлĕ пусăма çитнĕ материн продукчĕ, имĕннă миме продукчĕ, миме вăл—шухăшсен органĕ, çавăнпа та пысăк йанăша кĕрсе ӳкес мар тесен, шухăша материрен уйăрма йурамасть.

„Пĕтĕм философин аслă ыйтăвĕ, тет Енгĕљс, шухăшпа бытийе, духпа природă мĕнле хутшăнса тăни çинчен тăракан ыйту пулать... Философсем, çак ыйтăва хирĕç мĕнле ответ панине май, икĕ пысăк лагĕре уйăрăлса кайнă. Дух природăран малтан пулнă текенсем... **идеалисла лагĕр** пулса тăнă. Природăна тĕп пуçламĕш тесе шутлакансем вара **материалисăмăн** тĕрлĕ шкулĕсем йенне тăнă“ (**К. Маркс.** Избранные произведения, т. I, стр. 329).

Малала тата:

„Йапалалă, епĕр сисĕмпе туйса тăракан тĕнче, епĕр хамăр пурăнакан тĕнче пĕртен пĕр чăн-чăн тĕнче пулать... Пирĕн ăстăнпа шухăш, вăл темĕн пек ытлашши сисĕмлĕн туйăнсан та, йапалалă, ӳтлĕ органăн, мимен продукчĕ пулса тăрать. Матери дух продукчĕ мар, дух хăй вăл материн аслă продукчĕ кăна пулса тăрать“ (**К. Маркс.** Избранные произведения, т. I, стр. 332).

Материпе шухăш ыйтăвĕ çинче чарăнса тăрса, Маркс калать:

„Шухăшланине шухăшлакан материрен уйăрма йурамасть. Матери пĕтĕм улшăнусен субйекчĕ пулса тăрать“ (çавăнтах, стр. 302).

Марксисла философилĕ материалисăма палăртса парса, Ленин калать:

„Материалисăм ăстăнран, туйăмран, опытран килмен обйективнă реаљнăй бытийене (материне) пĕтĕмĕшрен йышăнать... Ăстăн вăл... бытийе сăнне кăтартса тăраканни çеç, лайăх пулсан та унăн сăнне тĕрĕсси патне çывăхрах çитерсе (адэкватлă, идеаљна-тĕрĕс) кăтартни пулать“ (**Ленин**, т. XIII, стр. 266—267).

Малала тата:

а) „Матери вăл пирĕн сисĕм органĕсем çине пырса тĕкĕнсе туйăм тăваканни пулса тăрать, матери вăл пирĕн туйăмра палăракан обйективлă реаљнăç... Матери, природă, бытийе, физически йапала — малтанхи, дух, ăстăн, туйăм, психически йапала — кайранхи“ (**Ленин**, т. XIII, стр. 119—120).

б) „Тĕнче картинĕ вăл матери мĕнле куçса тăнине, **„матери“** мĕнле **„шухăшланине“** кăтартакан картин пулса тăрать“ (çавăнтах, стр. 288).

в) „Миме шухăш органĕ пулса тăрать“ (çавăнтах, стр. 125).

в) Тĕнчене тата унăн саккунлă йĕркелĕхĕсене пĕлме май çук тесе тавлашакан, пирĕн пĕлӳсем чăн-тĕрĕс пулнине ĕненмен, обйективлă чăнлăха йышăнман, тĕнчере наукă нихăçан та пĕлме пултармала мар „хăйсен ăшĕнчи йапаласем“ („вещи в себе“) туллийех тесе шутлакан идеалисăма хирĕç-хирĕçле пулса, марксисла философилĕ материалисăм çакăн пек вĕрентет: тĕнчене тата унăн саккунлă йĕркелĕхĕсене **лайăхах** пĕлме пулать, епĕр природă саккунĕсем çинчен пĕлнисем—опытпа, практикăпа тĕрĕсленĕ чăн-тĕрĕс пĕлӳсем пулса тăраççĕ, вĕсем обйективлă чăнлăх пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ, тĕнчере пĕлме пултармала мар йапаласем çук, ку таранччен пĕлсе çитмен йапаласем çеç пур, вĕсене наукăпа практикă вăйĕсем уçса тупса пĕлĕç.

Кант тата ытти идеалиссем тĕнчене пĕлме çукки çинчен, пĕлме çук „хăйсем ăшĕнчи йапаласем“ çинчен каланă положенине критиклесе тата материалисăман пирĕн пĕлӳсем чăн-тĕрĕс пулни çинчен калакан паллă положенине хӳтлесе, Енгĕљс çырать:

„Çакнашкал тата ытти йышши философилĕ пăркаланчăксене пурне те чи татăклăн сирсе пăрахаканни вăл практикă, шăпах експеримент тата промышлĕннăç пулать. Епĕр природăн паллă йавленине хамăр ăнланни тĕрĕс пулнине ăна епĕр хамăр туни, епĕр ăна хăйĕн условийĕсенчен кăларса туни, çавăнпа пĕрлех тата ăна хамăр тĕллевсене пăхăнтарни тăрăх кăтартса пама пултаратпăр пулсан, вара Кантăн куçа курăнман „хăй ăшĕнчи йапали“ пĕтесси çитет. Чĕрчунсемпе ӳсентăрансен ӳт-пĕвĕнче пулакан химилĕ йапаласем, органически хими вĕсене пĕрин хыççăн теприне хатĕрлеме тытăначчен, çавăн пек „хăйсен ăшĕнчи йапаласем“ пулса йулнă; çапла тунипе „хăй ăшĕнчи йапала“ — пирĕншĕн йапала пулса пынă, çапла, сăмахран, ализарин, маренăран тунă сăрлакан йапала, ăна халĕ епĕр уйхирте ӳстерсе çитĕнтерекен маренă тымарĕсенчен мар, чылайах йӳне ӳкекен ансат майсемпе çĕркăмрăк тикĕтĕнчен тăватпăр. Коперникăн хĕвел çиçтеми виçĕ çĕр çул хушши гипотезă, пит тĕрĕс пулма пултармала, анчах çапах та, гипотезă пулса йулнă. Леверрйе çак çиçтемăн паллисем тăрăх кунсăр пуçне тата тепĕр, ку таранччен паллă пулман планетă пулмалине кăтартса панă çеç мар тата шутласа кăларнисем тăрăх çак планетăн *тĕнче талăкăшĕнчи вырăнне* те палăртса панă хыççăн, тата унтан кайран Галле çак планетăна чăнахах та тупнă хыççăн, Коперник çиçтеми кăтартса панă çиçтемă пулса тăнă“ (**К. Маркс.** Избранные произведения, т. 1, стр. 330).

Богданăва, Базарăва, Йушкевича тата Мах хыççăн кайаканнисене ыттисене фидеисăм пирки айăпласа тата материалисăмăн: природăри саккунлă йĕркелĕхсем çинчен епĕр пĕлнисем чăн-тĕрĕс пулни çинчен, наукă саккунĕсем обйективлă чăнлăх пулса тăни çинчен калакан паллă положенине хӳтлесе, Ленин калать:

„Кучухнехи фидеисăм пачах наукăна йышăнмасăр тăмасть; вăл пурĕ те наукăн „ытлашши претензийĕсене“, шăпах, обйективлă чăнлăх тĕлĕшĕнчи претензине йышăнмасть. Обйективлă чăнлăх пур пулсан (материалиссем вăл пур тесе шухăшлаççĕ), пĕр йестествознани кăна çынăн „опытĕнче“ тулашри тĕнчен сăнне кăтартса пире обйективлă чăнлăх пама пултарать пулсан, вара пур йышши фидеисăм та пĕр сăмахсăрах пăрахăça тухать“ (**Ленин**, т. XIII, стр. 102).

Çакăн пек ĕнтĕ, кĕскен каласан, марксисла философилĕ материалисăмăн характĕрлă паллисем.

Обшчĕствă пурнăçне вĕренес çĕрте, обшчĕствă историне вĕренес çĕрте философилĕ материалисăман положенисене сарни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине, обшчĕствă историне вĕренес çĕрте, пролетариат партийĕн практикăлă ĕçĕнче çак положенисемпе усă курни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илме çăмăл.

Природă йавленисем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни, пĕр-пĕринчен килсе тăни природă аталанăвĕн саккунлă йĕркелĕхĕ пулать пулсан, çакăнтан вара акă мĕн тухса тăрать: обшчĕствă пурнăçĕнчи йавленисем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни, вĕсем пĕр-пĕринчен килсе тухни, çавăн пекех, ăнсăртран пулнă ĕç мар, обшчĕствă аталанăвĕн саккунлă йĕркелĕхĕ пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствă пурнăçĕ, обшчĕствă историйĕ „ăнсăртлăхсен“ капланăвĕ пулма пăрахать, мĕншĕн тесен, обшчĕствă историйĕ обшчĕствă саккунлă йĕркелĕхĕпе аталанни пулса тăрать, обшчĕствă историне вĕренесси наукă пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, пролетариат партийĕн практикăлă ĕçĕ „паллă çынсен“ ырă кăмăлĕ çине мар, „ăс“, „пĕтĕмĕшле мораљ“ тата ыттисен требованисем çине мар, обшчĕствă аталанăвĕн саккунлă йĕркелĕхĕсем çине, çак саккунлă йĕркелĕхсене вĕренни çине тайăнса тăмала.

Малала. Тĕнчене тĕпчесе пĕлме пулать пулсан тата природă аталанăвĕн саккунĕсем çинчен епĕр пĕлнисем чăн-тĕрĕс пĕлӳсем, обйективлă чăнлăх пĕлтерĕшлĕ пĕлӳсем пулаççĕ пулсан, çакăнтан вара акă мĕн тухса тăрать: обшчĕствă пурнăçне, обшчĕствă аталанăвне, çавăн пекех, тĕпчесе пĕлме пулать, обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсем çинчен наукă кăтартса панă паллăсем—чăн-тĕрĕс паллăсем, обйективлă чăнлăх пĕлтерĕшлĕ паллăсем пулаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствă историйĕ çинчен вĕрентекен наукă, обшчĕствă пурнăçĕн йавленисем темĕн пек кăткăс пулсан та, калăпăр, биологи пекех, тĕрĕс наукă, обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсемпе практикăра усă курма пултаракан наукă пулса тăма пултарать.

Çапла ĕнтĕ, пролетариат партийĕн хăйĕн практикăлă ĕçĕсенче мĕнле те пулсан ăнсăртран пулнă сăлтавсемпе мар, обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсемпе, çак саккунсенчен тухакан практикăлă вывăдсемпе усă курмала.

Çапла ĕнтĕ, социалисăм етемлĕхĕн лайăх малашлăхĕ пирки ĕмĕтленнинчен наукă пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, наукăпа практикăлă ĕçĕн çыхăнăвĕ, теорипе практикăн çыхăнăвĕ, вĕсен пĕрлĕхĕ пролетариат партийĕн çул кăтартса пыракан çăлтăрĕ пулса тăмала.

Малала. Природă, бытийе, материаљнăй тĕнче—малтанхи пулать, ăстăн, шухăш—кайранхи, малтанхинчен тухса тăраканни пулать пулсан, материаљнăй тĕнче çынсен ăстăнĕнчен килмесĕр пурăнакан обйективлă реаљнăç пулать пулсан, ăстăн çак обйективлă реаљнăç сăнне кăтартса тăраканни пулать пулсан, çакăнтан вара акă мĕн килсе тухать: обшчĕствăн *материаљнăй пурнăçĕ, унăн бытийи*, çавăн пекех, малтанхи пулать, унăн духовнăй пурнăçĕ—кайранхи, малтанхинчен тухса тăраканни пулать; обшчĕствăн материаљнăй пурнăçĕ çынсен ирĕкĕнчен килмесĕр пурăнакан обйективлă реаљнăç пулать, обшчĕствăн духовнăй пурнăçĕ çак обйективлă реаљнăç сăнне, бытийе сăнне кăтартса тăраканни пулать.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствăн духовнăй пурнăçĕ йĕркеленсе пынин çăлкуçне, обшчĕствăлă идейăсем, обшчĕствăлă теорисем, политикăлă шухăшсем, политикăлă учреждениссем пуçланса кайнин çăлкуçне идейăсенче, теорисенче, шухăшсенче, политикăлă учреждениссенче хăйсенче мар шырамала, ăна обшчĕствăн материаљнăй пурнăç условийĕсенче, обшчĕствăлă бытийĕре шырамала, идейăсем, теорисем, шухăшсем тата ыттисем те обшчĕствăн материаљнăй пурнăçĕн, обшчĕствăлă бытийĕн сăнне кăтартса тăраканни пулаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствă историйĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче тĕрлĕ обшчĕствăлă идейăсем, теорисем, шухăшсем, политикăлă учреждениссем пулаççĕ пулсан, рабовладељчески строй вăхăтĕнче—пĕр йышши, феодалисăм вăхăтĕнче — тепĕр йышши, капиталисăм вăхăтĕнче — виççĕмĕш йышши обшчĕствăлă идейăсем, теорисем, шухăшсем, политикăлă учреждениссем куратпăр пулсан, çакă вара вăл идейăсен, теорисен, шухăшсен, политикăлă учреждениссен хăйсен „природинчен“, „свойствинчен“ килмест, обшчĕствăлă аталанăвăн тĕрлĕ тапхăрĕсенче обшчĕствăн материаљнăй пурнăç условийĕсем тĕрлĕрен пулнинчен килет.

Обшчĕствăн бытийи мĕнле, обшчĕствăн материаљнăй пурнăç условисем мĕнле пулаççĕ, унăн идейисем, теорисем, политикăлă шухăшĕсем, политикăлă учреждениссем те çавăн пекех пулаççĕ.

Çакна май Маркс калать:

„Çынсен бытийине вĕсен ăстăнĕ мар палăртса тăрать, пачах урăхла, вĕсен обшчĕствăлă бытийи вĕсен ăстăнне палăртса тăрать“ (**К. Маркс.** Избранные произведения, т. 1, стр. 269).

Çапла ĕнтĕ, политикăра йанăш тăвас мар тесен, вырăнсăр ĕмĕтленекен етемсен положенине лекес мар тесен, пролетариат партийĕн хăйĕн ĕçĕнче „етем ăсĕн“ отвлеченнăй „принципĕсене“ мар, обшчĕствăлă аталанăвăн ĕçе тапса паракан вăйĕ пулса тăракан обшчĕствăн материаљнăй пурнăçĕн конкретлă условийĕсене шута илсе ĕçлемеле, „аслă çынсен“ ырă кăмăлĕсене мар, обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвне чăннипе мĕн кирлине шута илсе ĕçлемеле.

Утописсем, вăл шутра, народниксем, анархиссем, ес-ерсем ӳкни, сăмах май каласан, вĕсем обшчĕствă аталанăвĕнче обшчĕствăн материаљнăй пурнăç условисем малти вырăнта пулнине йышăнманнинчен, тата, идеалисăма кĕрсе ӳксе, хăйсен практикăлă ĕçне обшчĕствăн материаљнăй пурнăçне аталанма кирлисене шута илни тăрăх мар, вĕсене шута илмесĕр тата вĕсене хирĕçле,—обшчĕствăн реаљнăй пурнăçĕпе çыхăнман „идеаљнăй плансем“, „пурне те çавăрса илекен пройектсем“ тăрăх туса пынинчен килнĕ.

Марксисăмăн-ленинисăмăн вăйĕпе пурнăçлăхĕ çакăнта пулать: вăл хăйĕн практикăлă ĕçĕнче шăпах та обшчĕствăн материаљнăй пурнăçне аталанма кирлисем çине тайăнса тăрать, обшчĕствăн реаљнăй пурнăçĕнчен нихăçан та уйăрăлса тăмасть.

Анчах та, Маркс сăмахĕсем обшчĕствăлă идейăсем, теорисем, политикăлă шухăшсем, политикăлă учреждениссем обшчĕствă пурнăçĕнче нимĕнле вырăн та йышăнмаççĕ тенине, вĕсем обшчĕствăлă бытийе çине, обшчĕствă пурнăçĕн материаљнăй условисен аталанăвĕ çине кайала пырса тивмеççĕ тенине пĕлтермеççĕ. Кунта епĕр халлĕхе обшчĕствăлă идейăсем, теорисем, шухăшсем, политикăлă учреждениссем **пуçланса тухни** çинчен, вĕсем **пуçланса кайни** çинчен, обшчĕствăн духовнăй пурнăçĕ унăн материаљнăй пурнăç условисен сăнне кăтартса тăраканни пулни çинчен каларăмăр. Обшчĕствăлă идейăсен, теорисен, шухăшсен, политикăлă учреждениссен **пĕлтерĕшне** илес пулсан, вĕсен историри **рољне** илес пулсан, вара историлĕ материалисăм вĕсене йышăнмасăр тăмасть çеç мар, пачах урăхла, вĕсен обшчĕствă пурнăçĕнчи, обшчĕствă историйĕнчи пысăк рољне, пĕлтерĕшне палăртса парать.

Обшчĕствăлă идейăсемпе теорисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Хăйсен ĕмĕрне пурăнса иртернĕ, обшчĕствăн пĕтсе пыракан вăйĕсен интересĕсемшĕн тăракан кивĕ идейăсемпе теорисем пур. Вĕсен пĕлтерĕшĕ çакăнта: вĕсем обшчĕствă аталанăвне, вăл малала кайассине чарса тăраççĕ. Обшчĕствăн малта пыракан вăйĕсен интересĕсемшĕн тăракан çĕнĕ, малта пыракан идейăсемпе теорисем пулаççĕ. Вĕсен пĕлтерĕшĕ çакăнта: вĕсем обшчĕствăн аталанăвне, вăл малала кайассине çăмăллатаççĕ, çавăнпа пĕрлех вĕсем обшчĕствăн материаљнăй пурнăçне аталанма кирлисене мĕн чухлĕ тĕрĕсрех кăтартса параççĕ, çавăн чухлĕ пысăкрах пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

Обшчĕствăлă çĕнĕ идейăсемпе теорисем обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕ обшчĕствă умне çĕнĕ задачăсем лартнă хыççăн тин пуçланса кайаççĕ. Анчах та вĕсем пĕр пуçланса кайсан вара, питех те пысăк вăй, обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕ лартнă çĕнĕ задачăсене татса парассине çăмăллатакан, обшчĕствă малала кайса пырассине çăмăллатакан вăй пулса тăраççĕ. Çакăнта курăнать те ĕнтĕ çĕнĕ идейăсен, çĕнĕ теорисен, çĕнĕ политикăлă шухăшсен, çĕнĕ политикăлă учреждениссен организацилекен, мобилизацилекен, çĕнетекен питех те пысăк пĕлтерĕшĕ. Обшчĕствăлă çĕнĕ идейăсемпе теорисем тĕрĕссипе çакăн пирки пуçланса кайаççĕ те ĕнтĕ: вĕсем обшчĕствăна кирлĕ, вĕсен организацилекен, мобилизацилекен, çĕнетекен ĕçĕсĕр обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕн пулса çитнĕ задачăсене татса пама **май çук**. Обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕ кăларса тăратнă çĕнĕ задачăсен никĕсĕ çинче пуçланса кайса, обшчĕствăлă çĕнĕ идейăсемпе теорисем хăйсене ваљљи çул уçса параççĕ, халăх массисен тивлечĕ пулса тăраççĕ, вĕсене обшчĕствăн пĕтсе пыракан вăйсене хирĕç мобилизацилеççĕ, организацилеççĕ, çапла майпа, обшчĕствăн пĕтсе пыракан, обшчĕствăн материаљнăй пурнăçне аталанма чарса тăракан вăйсене сирпĕтсе антарма çăмăллатаççĕ.

Çапла, обшчĕствăлă идейăсем, теорисем, политикăлă учреждениссем обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕн, обшчĕствă бытийи аталанăвĕн пулса çитнĕ задачисен никĕсĕ çинче пуçланса кайса,—кайран вара, вĕсем хăйсем обшчĕствăн материаљнăй пурнăçĕн пулса çитнĕ задачĕсене вĕçне çитиччен татса пама, материаљнăй пурнăçа малала аталанса пыма кирлĕ условисене туса, обшчĕствăлă бытийене, обшчĕствăн материаљнăй пурнăçне улшăнтарса пыраççĕ.

Çакна май Маркс калать:

„Теори массăсене çавăрса илсенех, материаљнăй вăй пулса тăрать“. (**К. Маркс**, и **Ф. Енгельс**, т. 1, стр. 406).

Çапла ĕнтĕ, обшчĕствăн материаљнăй пурнăç условисене улшăнтарма май пултăр тесен, вĕсен аталанăвне хăвăртлатас тесен, вĕсене лайăхлатассине хăвăртлатас тесен, пролетариат партийĕн обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвне кирлисене тĕрĕс кăтартса тăракан, çакна май вара халăхăн сарлака массисене хускатса йама пултаракан, вĕсене мобилизацилеме пултаракан, вĕсенчен пролетариат партийĕ реакцилĕ вăйсене çĕмĕрсе тăкма, обшчĕствăн малта пыракан вăйсем ваљљи çул хывма хатĕр тăракан аслă çарне организацилеме пултаракан обшчĕствăлă теори çине, обшчĕствăлă идейă çине тайăнмала.

„Економиссем“ тата меньшевиксем ӳкни, сăмах май каласан, çакăнтан килнĕ: вĕсем малта пыракан теорин, малта пыракан идейăн мобилизацилекен, организацилекен, çĕнетекен рољне йышăнман тата, вуљгарнăй материалисăма кĕрсе ӳксе, малта пыракан теорипе малта пыракан идейă рољне нимĕн чухлĕ те пекех хакламан,—çапла вара, партине пăссивлăх патне, ĕнтĕркесси патне тĕртнĕ.

Марксисăмăн-ленинисăмăн вăйĕпе пурнăçлăхĕ çакăнта пулать: вăл обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвне кирлисене тĕрĕс кăтартса тăракан малти теори çине тайăнать, теорине хăйне тивĕçлĕ вырăна хăпартать, унăн мобилизацилекен, организацилекен, çĕнетекен вăйĕпе вĕçне çитиччен усă курассине хăйĕн тивĕçĕ тесе шутлать.

Çакăн пек татса парать историлĕ материалисăм обшчĕствăлă бытийепе обшчĕствăлă ăстăн хушшинчи хутшăнусем çинчен тăракан, обшчĕствăн материаљнăй пурнăç аталанăвĕпе духовнăй пурнăç аталанăвĕн условийĕсем хушшинчи хутшăнусем çинчен тăракан ыйтăва.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

*) „Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен“ уйрăмăн пуçламĕшĕ „Чăваш Коммунĕн“ [illegible]-мĕш №-че пичетленнĕ.

Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле



В. И. Ленин комсомолăн III сйесĕн делегачĕсем хушшинче. 1920 çул.

П. Васильйĕв художник ӳкерчĕкĕ.

Малта пыракансен опытне сармала

(Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинче)

ПĔРРЕМĔШ УЧАСТКĂ (хамăр корр.) Малта пыракан рабочисем—стахановецсемпе ударниксем Октябĕрти Социалисăмлă Аслă револуци 21 çул тултаракан уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, чукунçула туса пĕтерессишĕн пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Бобров, Цветков, Кузнецов тата Терентйĕв йулташсем йертсе пыракан бригадăсем нормăна куллен 200—300 процентшар тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Гаврилинă йулташ йертсе пыракан хĕрарăмсен бригади ăмăртăва хутшăннăранпа плана йалан 120—130 процент тултарать. Октябĕрĕн 20-мĕшĕнче платниксен бригади (бригадирĕ Бобров йулташ) плана 250 процент пурнăçланă.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, строителства ĕçĕ вăраххăн пырать-ха. График тăрăх октябĕрĕн 5-мĕшĕпе 20-мĕш хушшинче 5.500 кубла метр çĕр чавмала пулнă пулсан, пĕтĕмпе те 2.200 кубла метр çеç чавнă. Çĕр чавас ĕç кайа йулнин сăлтавĕ—ĕç вăйĕ çителĕксĕрри. Çĕр чавнă çĕрте кашни кун 130 çын лашапа, 260 çын, çуран ĕçлемеле. Кăна чылай районсем пурнăçа кĕртмеççĕ. Сентĕрвăрри районĕнчен пĕрремĕш участкăра 75 çын лашапа, 150 çын çуран ĕçлемелĕ пулсан, октябĕрĕн 20—21-мĕшĕсенче пĕр çын та ĕçлемен. Шупашкар тата Тутаркас районĕсенчен те ĕçлекенсем сахал, октябĕрĕн 21-мĕшĕнче икĕ районтан та çуран ĕçлекенсем 23 çын çеç пулнă.

Ĕç вăйĕ çитменни ытти ĕçсене пурнăçа кĕртессине те чăрмав кӳрет. Иртнĕ уйăхсенче икшер нормă тултарса ĕçленĕ Цветков йулташ бригади йулашки кунсенче рабочисен хисепĕ чакнăран плана 120 процентран ытла тултараймасть.

Строителствăри стахановецсен опыт пысăк. Çав опытпа пĕтĕм рабочисене паллаштармала, тухăçлă ĕçлеме пур майсене те туса памала.

Хар. Лисин.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Окт̆аберĕн 19 — 20-мĕшĕсенче Шупашкар хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Хулари парти активĕ Обком çекретарĕ А. А. Волкăв йулташ Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕн итогĕсем çинчен тунă доклада итлесе сӳтсе-йаврĕ.

Пренире тухса калама çыраннă 62 çынтан 31 çын каларĕç. Пренире каланă йулташсем партин облăçри конференцийĕ йышăннă решенисем тĕрĕс пулнине палăртрĕç, вĕсем халăхăн пур йышши тăшманĕсене хирĕç хайăррăн кĕрешсе пымали çине, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене хăвăртрах пĕтермели çине, партилĕ-политикăлă тата хуçалăх ĕçĕсене вăйлатмали çине кăтартса пачĕç.

Çĕнĕ савăт строителствинчи партком çекретарĕ Могутин йулташ савăт строителствинче партилĕ-политикăлă ĕçсем начар тăни çинчен калат̆. Партком çекретарĕ пулнă Судаков коммуниссене строителстварти çитменлĕхсене пĕтерме мобилизацилемен, вăл пурĕ те Обком çекретарĕ пулнă Иванов патне докладной запискăсем кăна çырса ларнă. Судаков партком çекретарĕ пулнă чухне савăт строителствинче парти ĕçĕ начар пыни çинчен, столовăйра, ĕç организацийĕнче пысăк çитменлĕхсем пулни çинченех Чапрайĕвă йулташ калат̆.

Обком çекретарĕ пулнă Иванов работниксене йертсе пырас ĕçе партилĕ принцип тăрăх мар, работникăн политикăлă тата ĕçлĕхлĕ пахалăхĕсем тăрăх мар, çемйеле майсемпе лартса пынă. Пренире тухса каланă Никифăрăвпа Краçиљникăв йулташсем тума хушнă ĕçе мĕнле пурнăçланине куллен-кун тĕрĕслесе тăрасси, работниксен ĕçлĕхлĕ тата политикăлă сăн-сăпатне тĕрĕслесе пырасси, бољшевикла сыхлăха вăйлатасси, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене татăклăн пĕтерсе пырасси çинчен питех те тĕрĕс каларĕç. Краçиљникăв йулташ парти организаци Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ пулнă Ф. Степанăвăн буржуалă-националисла сăн-сăпатне мĕнле тупса палăртни çинчен каласа парат̆. Çак Ф. Степанăва тата ытти буржуалă-националиссене икĕпитлĕ Иванов йертсе пыракан вырăнсене лартнă. Вăл вĕсене тăрă шыв çине кăларасран пур майсемпе те хӳтлесе пытарса тăнă.

Серенков йулташ (пропагандиссен шкулĕнчен) буржуалă-националисла обшчĕствăра тăнă Григорйĕв çинчен, Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци Григорйĕва тăрă шыв çине кăларас ĕçре ытла хăйусăр пулни çинчен кăтартса парат̆.

ВКСХШ çумĕнчи партком çекретарĕ Краснов йулташ Алексейĕв буржуалă-националисла обшчĕствăра тăни çинчен, вăл шкул ĕçне начар йертсе пыни çинчен чарăнса тăчĕ.

Пренире тухса каланă Нейман тата ытти йулташсем Пединститут йут елементсемпе вараланса пĕтнине, уйрăм коммуниссем халăх тăшманĕсемпе йăлара çыхăнса кайнине палăртрĕç. Вĕсем партком çекретарĕ Германăв йулташ ĕçлеме пултарайманнине, вăл çак ыйтусене пуçламĕш парторганизацире сӳтсе-йавас ĕçре хăйусăр пулнине кăтартса пачĕç. Нейман, Бармин т. ыт. йулташсем шкулсене Парти Обкомĕн шкул пайĕпе унăн пуçлăхĕ Терентйĕв йулташ начар йертсе пыни çинчен каларĕç.

Осоавиахим ĕçне те тивĕçлипе критиклерĕç. Воронковпа Киçељов йулташсем самокритикăна хĕсекен Г. Осипăв оборонă ĕçне йертсе пыма пултарайманни çине кăтартса пачĕç. Вĕсем çавăн пекех тата Осоавиахимăн вырăнти организацисене парти йенчен йертсе пырассине вăйлатма кирли çинчен каларĕç.

Купцов йулташ (Куљпромсойуз) хулари актива ĕлĕк партин контрољ оргăнĕсенче ĕçленĕ Козин тата ыттисем тăшмансене тăрă шыв çине кăларас ĕçе мĕнле чарса пыни çинчен каласа пачĕ.

Пренире тухса каланисенчен нумайĕшĕ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Чăваш парторганизацине фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă - националисла агенчĕсене тата икĕпитлĕ Иванова тăрă шыв çине кăларма пысăк пулăшу пани çинчен, партин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ идейăпа политикă йенчен çӳлĕ вырăнта иртни çинчен, партин облăçри конференцин решенисене хăвăртрах пурнăçа кĕртме кирли çинчен каларĕç. Анчах та чылай коммуниссем çакна ăнланса илеймен-ха, тет Сомăв йулташ. Тĕслĕхрен вăл хула совечĕн çуртйĕр управленине (пуçлăхĕ Иванов йулташ) илет, вăл çуртйĕрсене хĕллене хатĕрлес ĕçсене туса çитермен.

Чурилăв йулташ халăх тăшманĕсемпе вĕсене пулăшакансем партин облăçри конференцин решенисене хăйсене майлă ăнланма тăрăшни çинчен, вĕсем хăйсемпе пĕр шухăшлă çынсене шырама тăрăшни, парти работникĕсем çинчен елек сарни çинчен калат̆. Партин облăçри конференцин решенисене тĕрĕс мар ăнланни коммуниссем хушинче те пулнă. Чурилăв йулташ партин облăçри конференци решенисене пурнăçа бољшевикла кĕртсе пыма кирли çинчен калат̆.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитет çекретарĕ Лапин йулташ бољшевикла сыхăлăха малашне тата ытларах вăйлатса пыма кирли çинчен, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес, партин облăçри конференцин решенисене пурнăçа кĕртес ĕçре пичетпе пуçламĕш парторганизацисен рољне ӳстерме кирли çинчен калат̆.

Пренире тухса каланă чылай йулташсем хаçатсенче парти пурнăçĕ çинчен çутатассине вăйлатма, пичетленсе тухакан сигналсене вĕçне çитерме, хаçат ĕçне парти активне хутшăнтарма кирли çинчен каларĕç.

Пуху, çавăн пекех, профсойуз ыйтăвĕсем çине те тимлĕн пăхрĕ.

Волкăв йулташ хăйĕн йулашки сăмахĕнче парти организацийĕн çывăхри задачисемпе пичет ролĕ çинчен ытларах чарăнса тăчĕ.

Парти активĕн пухăвĕ партин облăçри XIX-мĕш конференцин решенисене ырласа, парти организацисене, ПСК(б)П Обкомĕпе хула комитетне çак решенисене бољшевикла пурнăçлама чĕнчĕ.

„Парти конференцийĕ ПСК(б)П Обкомĕн политикăлă çулйĕрне тĕрĕс мар, унăн практикăлă ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак пани,—тенĕ парти активĕн пухăвĕ йышăннă резољуцире,—кашни коммуниса нимĕн шавсăр, çухăрашусăр халех бољшевикла çине тăрса, партин облăçри XIX-мĕш конференцин решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе куллен-кун ĕçлесе пыма хушат̆. Партин облăçри XIX-мĕш конференцин решенисем кашни пуçламĕш парторганизацине, ПСК(б)П хула комитечĕпе Обкома халăх тăшманĕсене хирĕç татăклăн, хайăррăн кĕрешсе пыма, вĕсене тăрă шыв çине кăларса пĕтерме, бољшевикла сыхăлăха хăпартма, идиотла чире—тимсĕрлĕхе пĕтерме, партилĕ-политикăла ĕçе, промышлĕннăçа, йалхуçалăхне, транспăрта, социалисăм строителствин тата ытти участкисене малашне пĕрмайах вăйлатса пыма, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те пĕтерсе пыма хушат̆“.

Парти активĕн хулари пухăвĕ парторганизацисене, советпа хуçалăх организацисен руководителĕсене, комсомола, профсойузсене партин облăçри конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе пыма чĕнет. Пуху Обкомпа хула комитетне, советпа хуçалăх организацисен руководителĕсене облăçри конференци решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе конкретлă ĕç планĕсем тума хушат̆.

Предприйатисенче, учреждениссенче, шкулсенче Окт̆абĕр умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва вăйлатса пырасси пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, парти активĕн хулари пухăвĕ парти, комсомол, профсойуз организацисене çак йухăмăн пуçне тăма, рабочисем, служăшчисем, инженерлă-техникăлă работниксем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе тата стахановла йухăма вăйлатса йани тăрăх 1938 çулти промфинплана ытлашшипех тултарма чĕнет.

Парти активĕн пухăвĕ комсомола йертсе пырассине татăклăнах вăйлатма кирлине палăртса, Обкомпа хула комитетне тата пуçламĕш парторганизацисене комсомола отчотпа суйлав пухăвĕсем иртерес ĕçе организацилессинче тата ленинла-сталинла комсомолăн 20-мĕш уйавне иртерес ĕçре конкретлă пулăшу пама хушат̆.

Парти активĕ пуçламĕш парторганизацисене Осоавиахим организацисен ĕçĕсене лайăхлатас, Осоавиахим организацисенче сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес, Осоавиахим билечĕсене улăштарас ĕçе ăнăçлăн иртерес, оборонă ĕçне вăйлатса йарас, оборонă кружокĕсен ĕçĕсене чĕртсе йарас ыйтусем çине уйрăманах тимлĕн пăхма хушрĕ. Парти активĕн пухăвĕ парти организацисене СВБ йачейкисене хатĕрленнĕ работниксем парса тĕреклетме хушрĕ. Тĕне хирĕç ĕçлекен работниксене вĕрентсе хатĕрлесси çине хытă пăхмала.

Парти активĕн пухăвĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕ халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ таччăн хутшăнса ĕçленипе хатĕрлесе кăларнă ПСК(б) Парти историйĕ парти кадрĕсене политикăлă воспитани парас ĕçре, бољшевисăма вĕренсе алла илес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, коммуниссене, чăн малтан пĕтĕм парти активне, ПСК(б)П историне тĕплĕн, тарăнăн вĕренме чĕнет.

„Парти активĕн пухăвĕ,—тенĕ резољуцире,—ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраљ-мартри тата йанварти пленумĕсен решенисемпе тата Сталин йулташăн кăтартăвĕсемпе хĕçпăшалланнă Чăваш парторганизацийĕ партин облăçри XIX-мĕш конференцин решенисене бољшевикла пурнăçлама пултарĕ, халăх тăшманĕсене тупса палăртса пĕтерес, виççĕмĕш пилĕкçуллăх задачисене тултарас ĕçре тата та пысăк çитĕнӳсем тума пултарĕ.“

Парти активĕн хулари пухăвĕ пĕтĕм коммуниссене, комсомолĕцсене, рабочисене, стахановĕцсене, инженерлă-техникăлă работниксене, колхозниксене, колхозницăсене пирĕн аслă Ленин-Сталин партийĕпе совет правителстви тавра, пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçсе тăма, Сталин йулташ йертсе пынипе коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне пыма чĕнет.

Пуху пысăк хаваслăхпа бољшевиксен аслă партийĕн çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăнчĕ.

Парти активĕн пухăвĕ Сталин йулташ патне йанă çыру

Мускав, Кремљ.

СТАЛИН ЙУЛТАША

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Орденлă Чăваш республикĕн столицинчи парти активĕн пухăвĕ Сире, тăван аттемĕре тата учителе, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен генилĕ çулпуçне, ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса тата организацилесе пыракана хĕрӳлĕ бољшевикла салам йарат̆.

Партин Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе тата Есĕр хăвăр йертсе пынипе, Сталин йулташ, партин Чăваш организацийĕ, Чăваш республикĕнчи ĕççыннисен массисем пулăшса пынипе, троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсен—йунлă фашисăма тара кĕрĕшнĕ агентсен çăхан йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Чăваш халăхĕ, пирĕн çĕршыври çĕрçитмĕл мĕлйунлă халăхпа пĕрле, Есĕр хамăрăн ытарайми ырă тăван çĕршыври ĕççыннисемшĕн хĕрӳлĕн тăрăшнине кулленех туйса тăрат̆. Ленинла-сталинла ăслăрăн аслă наци политикине пула, Чăваш республикĕ економикă тата политикă йенпе пысăк ӳсĕмсем турĕ. Аслă Совет Сойузĕнчи халăхсен тăванлă çемйинче Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем телейлĕ, пуйан та куљтурăлă пурăнаççĕ. ССР Сойузĕнчи халăхсен сталинла туслăхне никам та тата нихăçан та пăсма пултараймĕ. Совет халăхĕн мораљлĕ-политикăлă пĕрлĕхне никам та тата нихăçан та хавшатма пултараймĕ.

Партин Чăваш облаç организацин XIX-мĕш конференцийĕ хурçă пек çирĕп пĕрлĕхлĕ тата Чăваш республикĕнчи бољшевиксем партин Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра тата аслă Сталин йулташ тавра хăватлă пĕтĕçсе тăнă паллăпа пулса иртрĕ. Чăваш республикĕнчи бољшевиксем партин тĕп çулйĕрĕшĕн, коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн сталинла кĕрешес кăмăлпа хастарлă.

Епĕр, Чăваш республикĕн столицинчи парти активĕ, Сире, хаклă Сталин йулташ, çапла шантарса калатпăр: епĕр малашне те Чăваш республикне куљтурăпа економикă тĕлĕшĕнчен чечеклентерсе пыма, ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пыма, хамăрăн ытарайми тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетме, ПСК(б)П Тĕпкомĕ, Есĕр, Сталин йулташ тата Сирĕн шанчăклă соратник Молотăв йулташ йертсе пыракан Совет правителстви лартнă задачăсене пурне те пурнăçлăпăр. Сирĕн шанчăклă соратник, епĕр йуратакан К. Е. Ворошилăв йулташ йертсе пыракан пирĕн тăван Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне тата ытларах йуратăпăр, унщăн тата ытларах тăрăшăпăр; троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла ирсĕр бандăсен йулашкисемпе малашне те пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе пырăпăр.

Епĕр бољшевиксен Ленинла-Сталинла партин чаплă историне бољшевикла тимлĕхпе вĕренĕпĕр, партире тăракан тата партире тăман бољшевиксене, пирĕн чаплă комсомолĕцсене ленинла-сталинла хăватпа тата принциплăхпа вĕрентсе пырăпăр.

Епĕр çапла шантарса калатпăр Сире, Сталин йулташ: орденлă Чăваш республикĕн столицинчи бољшевиксем, бољшевиксен партин Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе, коммунисăм татăклăнах çĕнтерессишĕн кĕрешес ĕçре йаланах Чăваш парторганизацин малти ретĕнче пырĕç.

Сывă пултăр бољшевиксен Ленинла-Сталинла партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван çулпуçĕ тата учител аслă Сталин!

Герой-пулеметчик Гаљйанăв йулташ Заозернайа высота çинчи çапăçусенче йапонĕцсене çĕр çын ытла вĕлернĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Красноармейĕцсен йуррипе ташшин ССР Сойузĕнчи ансамблĕн артисĕ Миловидăв йулташ хăйĕн сехетне Гаљйанăв йулташа парнелесе парат̆.

Д. И. Левантовский фото-ӳкерчĕкĕ („Пресскляше“).

Перељштейн

Комсомол—бољшевиксен партин резервĕ

Бољшевиксен партийĕ социалисăмлă ревољуци кĕрешĕвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче çамрăксем çинчен тăракан ыйтăва рабочи клас диктатуришĕн кĕрешес тата ревољуцилĕ резервăсене мобилизацилес пĕтĕмĕшле задачăсемпе çыхăнтарнă. 1905 çултах Владимир Илйич Ленин çапла çырнă:

„... Çамрăксене анлăрах та хăйулăрах, хăйулăрах та анлăрах, тата тепĕр хут анлăрах тата тепĕр хут хăйулăрах, вĕсенчен хăрамасăр, ĕçе хутшăнтармала Вăрçă вăхăчĕ. Çамрăксем кĕрешӳ ăнаçлăхне татса параççĕ, студент çамрăксем те, тата ытларах—рабочи çамрăксем те“ (Ленин. Сочинения, т. VII, стр. 102).

1917 çулти март—окт̆абĕр тапхăрĕнче Российари çамрăксен массăлă йухăмĕ бољшевиксен партин идейăлă влийанипе ӳссе пынă. Партин Сталин йулташ йертсе пынипе пулса иртнĕ VI-мĕш сиесĕ, социалисăмлă ревољуцин кунçулне татса паракан кирлĕ ыйтусемпе пĕрле тата çамрăксем çинчен те ыйту сӳтсе-йавнă. Сиес йышăннă резољуцире: „Хаљхи вăхăтра, рабочи класăн кĕрешĕвĕ тӳррех социалисăм кĕрешĕвне куçнă тапхăрта, сиес рабочи çамрăкĕсен класлă, социалисăмлă организацисене тума пулăшасси хаљхи тапхăрăн тăхтаса тăма çук задачисенчен пĕри пулат̆, тесе шутлат̆ тата парти организацисене çак ĕçе ытларах тимлĕх хума хушат̆“, тесе каланă.

ПСÇЛКС пуçланса кайнин историйĕ çакна кăтартса парат̆: çамрăксен коммунисла сойузне, пирĕн ревољуцин çамрăк резервисене воспитани пама тивĕçлĕ сойуза тăваканни Ленин—Сталин партийĕ пулнă.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партийĕ рабочи клас диктатури системинче тĕп вăй, ĕçе татса паракан вăй пулса тăрат̆, вăл Совет Сойузĕнчи ĕççыннисен малти отрйачĕ.

Парти рабочи класăн пĕтĕм массăлă организацисен ĕçĕсене пĕрлештерсе тăрат̆, вĕсене пĕр тĕллев патне—коммунисăмлă обшчĕствă тăвасси патне илсе пырат̆. Парти коммунисăм строителствине—партине ĕççыннисен пысăк массисемпе çыхăнтарса тăракан организацисем урлă йертсе пырат̆. Кун пек организацисем вĕсем профсойузсем, советсем, коопераци, комсомол.

ПСÇЛКС—малта пыракан совет çамрăкĕсен массăлă организацийĕ, вăл партилĕ организаци мар, анчах ПСК(б)П çумĕнче тăрат̆. Унăн тĕллевĕ—çамрăк ăрăва коммунисла воспитани парас ĕçре партине пулăшса пырасси пулат̆. Тӳррех парти çумĕнче тăрса, коммунисла организаци пулса комсомол парти программине майлă тăрат̆. Ленинла-сталинла комсомолăн пĕтĕм историйĕ, унăн пĕтĕм ĕçĕ вăл партин программине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешӳре партин активлă помошникĕ пулнине, вăл халĕ те çаплаххине кăтартса тăрат̆.

Окт̆аберти Социалисăмлă Аслă ревољуци кунĕсенче Ленин кĕрешĕвĕн ĕçе татса паракан участкисене рабочи çамрăксемпе матроссенчен организациленĕ ударлă групăсене йанă. Граждан вăрçи çулĕсенче, çамрăк Совет республикине вăрçă хăратса тăнă вăхăтра, комсомол хăйĕн лайăх ывăл-хĕрĕсене унчухнехи нумай йышлă фронтсене йарса тăнă. 1919 çулта комсомолăн иккĕмĕш сиесĕ комсомолăн массăлă мобилизацине ирттерме йышăнат̆. Темиçе вуншар пин комсомолĕцсем алла хĕçпăшал тытса интервентсемпе шургвардейĕцсене хирĕç çапăçаççĕ. Мускав, Питĕр, Донбас тата ытти хуласенчи комсомол организацисем хăйсем уйрăм отрйадсем туса фронтсене кайнă, вĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç те, шурă пољаксене хирĕç те, хамăр çĕршыври нумай йышлă тăшмансене хирĕç те паттăрăн çапăçнă. 1921 çулта кĕркунне Хабаровскра çамрăксенчен Карл Либкнехт йачĕпе тăракан çар отрйачĕ тунă, вăл йапонĕцсене хирĕç çапăçнă. Амур облăçĕнчи комсомолĕцсем хăйсем çине „Сойузри пĕтĕм активлă работниксене округри политотделсем урлă çара пама“ обйазателствă илнĕ. Çара каймасăр йулнă çамрăксене те çара йама хатĕрленĕ.

Çĕршер комсомолĕцсем социалисăмлă тăван çĕршывшăн çапăçса паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, вĕсем партипе халăх ĕçĕшĕн паттăрăн тăрса çапăçнă.

Комсомол пирĕн çĕршыври ĕççыннисем парти йертсе пынипе халăх хуçалăхне ура çине тăратма, хамăр çĕршывра социалисăмлă хуçалăх тума тытăннă çулсенче те хăйĕн паттăрлăхне кăтартса ĕçлерĕ.

Пирвайхи пилĕкçуллăх çулĕсенче те комсомол парти помошникĕ пулнине тӳрре кăларчĕ, вăл Ленин социалисăмлă ăмăрту çинчен каланă шухăшсене пурнăçа кĕртессине пуçарса йараканни пулчĕ. Комсомол савăтсенче, стройкăсенче ударлă бригадăсем, комсомолла участкăсем, цехсем, агрегатсем тунă. Комсомол пуçарса йанипе пуçланă ăмăрту хамăр çĕршывра пĕтĕм халăхсен йухăмĕ пулса тăчĕ, вăл ăмăрту çĕршыва индустриализацилемелли сталинла программăна пурнăçлас ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăчĕ.

Социалисăмлă çĕршывра комсомолĕцсем хăйсен паттăр ĕçĕсемпе тăван çĕршыва мухтава кăлараççĕ. 1929 çултан пуçласа 1933 çула çитиччен социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисенче ĕçлеме 350 пин комсомолĕца йанă. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ 1930—1933 çулсем хушшинче тĕрлĕрен мобилизацисем чылай ирттерчĕ: 35 пин комсомолĕца Донбасри çĕркăмрăк шахтисенче ĕçлеме йанă: 20 пин комсомолĕц—вăрман хатĕрлевне, 7 пин комсомолĕц—Сталинградри трактăр савăтне, 5 пин комсомолĕц—чукунçул çине смазчиксем пулса ĕçлеме кайнă. Комсомолĕцсем Днепрострой, метро тунă, вĕсемех Магниткă, Кузнецк, Уралмаш т. ыт. пысăк предприйатисене тунă çĕрте паттăрăн кĕрешнĕ. Комсомолĕцсен вăйĕпе çĕнĕ хуласем туса лартнă, вăл хуласенчен пĕри—тайгара туса лартнă Амур çинчи Комсомољск.

Комсомол промышлĕннăçпа йал-хуçалăхĕнче техникăна вĕренсе алла илессишĕн массăлă йухăм пуçарса йараканни пулчĕ.

Темĕн чухлĕ комсомолĕцсем кулаксене хирĕç хайăррăн кĕрешсе колхозсем организациленĕ çĕрте ĕçлерĕç; комсомолĕцсем ĕçхресченĕсене социалисăм çулĕ çине тăма пулăшрĕç. Комсомол сталинла пилĕкçуллăхсемшĕн кĕрешсе тунă çитĕнӳсем вĕсем комсомол парти йертсе пынипе, партин Сталинла Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе пулнă.

Бољшевиксен партийĕ çамрăксене социалисăмшăн кĕрешме конкретлă ĕçсем тăрăх вĕрентсе пырат̆. Парти йертсе пыракан ленинла-сталинла комсомол çамрăксем хушшинче тăшмансем рабочи клас вăйне, социалисăм строителствин ăнаçăвне ĕненес мар шухăш сарма тăнине çĕмĕрсе тăкрĕ, хăйĕн речĕсенче рабочи класа демобилизацилекен оппортунисла самот̆ок „теорине“ тăрă шыв çине кăларчĕ.

ПСК(б)П программи майлă тăрса, комсомолĕцсем хăйсен пĕтĕм практикăлă ĕçĕсемпе, хăйсен пĕтĕм политикăлă вĕренĕвĕпе хăйсене бољшевиксен парти ретне кĕме хатĕрлеççĕ. Комсомол партин тĕп резерви пулса тăрат̆, коммунисла парти ваљљи бољшевикла ăру хатĕрлет.

Иртнĕ 20 çул хушшинче комсомолран партине 995.141 çын илнĕ. Кăçалхи çент̆аберĕн 20-мĕшĕ тĕлне, партине çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа 177.452 комсомолĕца партине илнĕ. Комсомолĕцсенчи лайăххисене партине илнипе пĕрлех, комсомолĕц-коммуниссене парти ĕçне лартасси пулса пырат̆. Иулашки çул хушшинче партин йертсе пыракан ĕçне 620 комсомолĕц-коммуниса лартнă. Вĕсенчен 351 çын—парти райкомĕн çекретарĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Хăйĕн хушшинчен чи лайăх çынсене партине панипе пĕрлех, комсомол рабочи класăн пур массăлă организацийĕсем, государствă тытăмĕн пур отрăçлисем ваљљи резервăсем хатĕрлет. 1929 çултан 1935 çула çитиччен комсомолĕцсенчен 123 пин инженерсемпе техниксем, 80 пине йахăн социалисăмлă йалхуçалăх специалисĕсем 90 пин учител, 40 пине йахăн медицинă работникĕсем хатĕрленĕ. Çĕршыври аслă шкулсемпе техникумсенче 500 пин ытла комсомолĕцсем вĕренеççĕ.

Çапла пулăшса пырат̆ ĕнтĕ ленинла-сталинла комсомол партипе совет интеллигенцийĕн кадрĕсене хатĕрлес ĕçре. Комсомол нимĕнле государствă та хăйĕн кадрĕсемсĕр тытăнса тăма пултарайманнине лайăх пĕлсе тăрат̆.

Парти резерви пулса тăракан, социалисăм строителстви ваљљи кадрсем хатĕрлес ĕçре активлăн кĕрешекен комсомолăн ролĕ питех те пысăк, Вăл хăйех те паллă. Пирĕн çĕршыври халăх йышĕн нумай пайĕ çамрăксем тата Окт̆аберти Социалисăмлă Аслă ревољуци хыççăн çуралнă ачасем. Парти комсомола çамрăк ăрăва, пирĕн аслă халăхăн малашлăхĕ пулса тăракан ăрăва „воспитани парас ĕçе шанса пачĕ.

Совет çамрăкĕсем çинчен аслă Сталин ăшă кăмăлпа çапла каланă: „Çамрăксем—пирĕн малашлăх, пирĕн шанăç... çамрăксем пирĕн вырăна, ваттисем вырăнне тăмала. Вĕсен пирĕн йалава çĕнтерӳ вĕçĕ патне йатса çитермеле“.

Комсомола парти йертсе пырасси—комсомолăн пĕтĕм ĕçĕнчи кирлĕрен те кирлĕ ĕç.

Комсомол хамăр çĕршыв оборонинче уйрăманах пысăк вырăнта тăрат̆. Сталин йулташ 1929 çулта „Червоная Украина“ крейсер çинче пулнă хыççăн, краснофлотĕцсем çинчен çапла çырса хăварнă: „Çакăн пек йулташсемпе експлоататăрсемпе пусмăрлакансен пĕтĕм тĕнчине çĕнтерме пулат̆“.

Комсомол Осоавиахим организацин чунĕ пулса тăрат̆. Унта пиншер, вуншар пин çамрăксем вĕçев ĕçне, тĕл пеме вĕренеççĕ, унта вĕсем çĕршыва тăшман сывлăшран килсе тапăнассинчен, химилĕ майпа тапăнасран сыхлама вĕренеççĕ. Хасан кӳлли патĕнчи çапăçура пайтах комсомолĕцсем хăйсем тăван çĕршывăн паттăр патриочĕсем пулнине кăтартрĕç.

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла бандитсем, национал-фашисла наймитсем пур майсемпе те комсомола партине хирĕç тăратма тăрăшрĕç, вĕсем комсомола парти йертсе пырассине шанаççăра каларма, çамрăксемпе хăйсен контрревољуцилĕ ирсĕр ĕçĕсене тунă çĕрте усă курма тăрăшнă.

Ылханлă тăшмансем йăнăшрĕç. Комсомол, пĕтĕм совет çамрăкĕсем йаланах партин Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕ хыççăн пынă, халĕ те çапла пыраççĕ, малашне те çаплах пырĕç.

Фашисла çĕлен-калтасен йăвисене аркатнипе комсомол бољшевиксен партийĕ тавра тата ытларах пĕтĕçрĕ; йаланах, пур çĕрте те сыхăлăхлă пулмала, тăшмана хирĕç хайăррăн кĕрешмеле—çакăн пек комсомолăн тимĕр пек çирĕп саккунĕ. Çакăнта комсомолăн „малашнехи“ ĕçĕнчи çитĕнĕвĕсен никĕсĕ.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Стаханăвла ĕçлеме условисем туса памала

Октăбĕрти Социализмăла Аслă революци пулни 21 çул тултарать. Çакă чаплă кун çывхарнă май кашни ĕççыннин кăмăлĕ савăнăçлă. Ленин—Сталин партийĕ йĕртсе пынипе, ĕççынисем уйава пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илеççĕ.

Канашри вакунсем йусакан саватри стаханăвçĕсемпе ударниксем Октябер уйавĕ умĕнхи ăмартăва куллен кун вăйларах хутшăнса пыраççĕ. Кунта кашни цехпа цех, сменăпа смена, бригадăпа бригада тата пĕрчĕксем пĕр-пĕринпе ăмартаççĕ. Самахран, йăваç каскалакан цехри Йемельянова стаханавка Инспектарăва стаханавкăпа ăмартса ĕçлесе хăйĕн планне куллен 200—250 процент тултарса пырать. Çавăн пекех çамрăк стаханавка Костычева Ивановăпа, Родычкина Серăйĕвăпа ăмартаççĕ. Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă май комсомолецсен производствари активлăхĕ вăйлăн ӳсре. Саватра пĕтĕмпе 221 комсомолец. Вĕсен хушшинче стаханăвçĕсем 68 çын, ударниксем 53 çын.

Акă, таварла комбинатри комсомол организацийне илер. Демьянков йулташ бригадинче 13 комсомолец, вĕсем пурте пĕр-пĕринпе соцдоговарсем туна. Демьянков й. комсорг пулса ĕçлет, вăл хăйĕн нормине куллен 250—300 процент таранччен тултарса пырать. Боголмолăв й. бригадинче 16 комсомолец. Кунта Казаков станочник нормăсене 250 процента çитиччен тултарса пырать.

Колеснăй цехри комсомолецсем—Борис Самарин хăйĕн нормине 270 процента çити, Григорий Самарин 280 процента çити, Жмер токăр—300 процента çити тултарса пыраççĕ.

Анчах саватра стаханăвçĕсене валли çителĕклĕ условисем туса паман.

Саватра чылай вăхăт хушши пытанса пурăннă халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла шпионсем нумай сăтăрла ĕçсем туса хăварнă. Тăшмансен аллинчен саватăн чĕри—теплоелектроцентраль уйрăмах пысăк йăварласем тӳснĕ. Халĕхи вăхăтра електроенерги çителĕксĕр пирки нумай станоксем ахаль тăраççĕ. ТЭЦ-а туса пĕтерме панă срук иртсе кайни çулталăк çитрĕ, анчах ТЭЦ-а халь те ĕçе ярайман.

Саватăн руководстви, саватри организацисем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туман. Кунта вăхăта ытларах калаçса иртереççĕ.

Саватăн коммуналлă пайĕ рабочисем, стаханăвçĕсем валли хваттерсене пурăннипе пĕлмест. Хваттерсем çителĕксĕр, кунсăр пуçне чылай çуртсем йухăнса кайнă, вĕсене йусас тĕлĕшпе коммуналла пай çуллахи вăхăтра нимĕн те туман. Халĕ хĕле кĕрес умĕн тин çавăрса тăчĕç кунти çынсем.

Ку çитменлĕхсене пĕтермеле. Саватри парти комитечĕпе профсоюз комитечĕн, сават начальникĕн стаханăвла йухăма тата ытларах вăйлатассишĕн большевикла тăрăшса ĕçлемеле.

Е. А. Антонăва.
РСФСР Верховнăй
Совет депутачĕ.

Виçĕ стаханăвçĕсен ăмăртăвĕ

ÇĔМЕРЛЕ. Комбинатра Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту саралнăçемĕн саралса пырать. Рабочисемпе работницăсем, инженерсем, техниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, куллен-кун çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ.

Столярнăй цехра ĕçлекен Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Верă Касйанăвă йулташ Димитрийĕвă тата Вавилăв стаханăвçĕсемпе ăмăртса ĕçлет. Касйанăвă йулташ нормăна куллен 200 процентран кайа мар тултарса пыма пулнă. Вăл халĕ кашни кун нормăна 300 процентран 450 процента çити тултарать. Вавилăв йулташ та хăйпе ăмăртакан йулташĕсенчен йулмасть. Вăл нормăна 300 — 350 процентшар тултарать.

Çавăн пекех, хăма çуракан цехри рабочисем хушшинче те пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсен хисепĕ ӳсех пырать. Кульковă бригади (бригадăра 6 çын), стаханăвла бригадă йатне илнĕскер, кашни сменă нормине 150 процентшар тултарса пырать. Чĕр тавар çителĕклĕ пулсан, бригадă нормăна тата та ытларах тултарма пултарать, анчах комбинат руководителĕсем ку тарана çитсе те цехсене чĕр тавар çителĕклĕ кӳрсе парассишĕн тăтăклă ĕçсем туман-ха.

А. Платонăв.

Стаханăвçĕсен опытне сарса пымала

ИШЛЕЙ. Елменкассинчи инвалидсен ертелĕ 109 çынна пĕрлештерсе тăрать. Членсем хушшинче стаханăвла ĕçлекенсем те сахал мар. Иван Сазанăв, М. Йефимăвă, И. Петров, Васильйĕвă тата ытти йулташсем чăпта çапас ĕçре ĕçлесе виççĕмĕш квартал планне 200-шер процент тултарнă.

Стаханăвçĕсемпе ударниксем Октăбĕр уйавне хатĕрленнĕ май, пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеме тытăнса тата та пысăкрах ӳсĕмсем тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Анчах ăмăрту стаханăвçĕсем хушшинче çеç сарăлса пырать-ха. Стаханăвçĕсен опытне членсен хушшине сарасси те тивĕçлипе пулса пымасть. Чылайĕшĕ халĕ те начар ĕçлеççĕ. Çапла вара, плана пĕтĕмĕшпе тултарасси те йулса пырать.

Ертел правлени руководителĕсем членсем хушшинче культмассăлă ĕçе вăйлатасси, тухăçлăн ĕçлеме условисем туса парасси çине тимлĕн пăхмаççĕ. Чĕр таварсем çителĕксĕр. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ку тарана çитсе те тĕплĕн сӳтсе-йавман. Кунашкал пулни ертеле чылай йенĕпе чăрмав кӳрет. Руководителсен вăхăта вăраха йамасăр вăл çитменлĕхсене пĕтермеле.

Г. Шчербаков.

Одессăра Алексей Толстой писателĕн произведенийĕ тăрăх „Петр I" кинокартинăн иккĕмĕш серине ӳкереççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: фильм кадрĕ. Меньшикăв Петрпа тата Йекатеринăпа голландски городокра тĕлпулни. Сулахайран сылтăмала: республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ, орденоносец М. И. Жарăв Меньшикăв ролĕнче, республикăн тава тивĕçлĕ артистки А. К. Тарасăвă Йекатеринă ролĕнче тата республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Н. К. Симонăв Петр I ролĕнче.

Подберезски фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Переписçре ĕçлеме шанчăклă, пултарулă çынсем

ЙĔПРЕÇ. 1939 çулхи халăх переписĕнче ĕçлеме кадрсене пĕтĕмпех тупса çитернĕ. Кадрсен йышĕ шанчăклă, пултарулă. Перепис пай заведуйушчийĕсемпе вĕсен помошникĕсем, инструктăр-контролйорсем, счотчиксем хушшинче ПСК(б)П членĕсем 12 çын, ПСÇЛКС членĕсем—63 çын, Верховнăй Советсен суйлавĕсенче агитатăрсемпе пропагандиссем, суйлав комиççи членĕсем, председателĕсем, çекретарĕсем пулса ĕçленисем 146 çын, иртнĕ переписçре пулнисем—110 çын. Пĕлӳ тĕлĕшпе: аслă шкул пĕтернисем 24 çын, вăтам шкул пĕтернисем—115 çын, ыттисем пуçламĕш шкул пĕтернисем 23 çын.

Халăх переписне лайăх хатĕрленсе, кăтартулă ирттерме пур условисем те пур. Халăх хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕçе сарса пыма культурла вăй çителĕклĕ. Верховнăй Советсен суйлавĕнче ĕçленĕ активиссем 438 çын, иртнĕ переписçре ĕçленисем 222 çын, учителсем 279 çын. Кусемсĕр пуçне, районра колхоз клубĕсемпе вулав çурчĕсем 29, тата партипе комсомол пуçламĕш организацисем пур. Çак культурлă вăйа пĕтĕмпех халăх переписне хатĕрленсе иртерес ĕçе йавăçтарнă.

Кашни йалсовет çумĕнче (пурĕ 25 йалсовет) пулăшу комиççисем организациленĕ. Пулăшу комиççисем 1939 çулти халăх переписне хатĕрленессипе халăх пухăвĕсем ирттереççĕ. Октăбĕрĕн 12-мĕшне 20 йалсоветра пухусем ирттернĕ. Халăх переписĕн задачисене пĕлме тăрăшать, пухусенче активлă тухса калаçаççĕ.

Акă, Буинск поçолăкĕнче çентăбĕрĕн 24-мĕшĕнче ирттернĕ пухура поçолăкри рабочисемпе служăшчисем пурте пулнă. Пухура инструктăр-контролйор Маркăв йулташ çитес переписçе хатĕрленесси çинчен доклад туса панă. Вăл хăйĕн докладне 1937 çулта пулса иртнĕ халăх переписне ирттерес ĕçре халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринĕцсем, буржуалă националиссем пысăк чăрмав кӳнипе, çав майпа переписçе тĕрĕс мар ирттернине кăтартса пачĕ.

Йулашкинчен пуху перепис ирттерес пирки постановлени йышăнчĕ.

1939 çулти халăх переписне хатĕрленесси çинчен çамрăксен пухăвĕсенче те анлăн сӳтсе-йаваççĕ. Октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Тимешĕнче халăх переписне хатĕрленессипе йатарласа çамрăксен пухăвĕ иртнĕ. Пухура çамрăксем 100 çын ытла пулнă. Вăл пухура участкăри перепис пай заведуйушчийĕ Илларионăв йулташ 1939 çулти халăх переписĕн задачисем çинчен доклад туса панă.

Октăбĕрĕн 12-мĕшĕнче Хурамал йалĕнче çав подрайона кĕрекен учителсен сойузĕн членĕсен пухăвĕнче халăх переписĕ çинчен сӳтсе-йавнă.

Халăх переписне хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр йалсоветсем халăх переписне хатĕрленессипе нимĕн те тумаççĕ. Хырхĕрри йалсоветĕнче пулăшу комиççи организациленĕ, анчах комиççи составне йалсовет президиумĕнче халĕ те пăхса тухса çирĕплетмен. Йалсовет председателĕ Кладкин президиум ларăвĕ ирттерме „вăхăт" тупаймасть. Кладкин йалсовет ĕçĕпе ĕçлеме пăрахнă, кашни кун ĕçсе çӳрет. Йалсовет çекретарĕ те ĕçлеме пăрахнă, çĕнĕрен çекретар тупса лартман. Йалсовечĕ кунĕ-кунĕпе питĕрĕнсе тăрать.

Çавăн пекех Хумри Выçли йалсоветĕнче те. Кунта пулăшу комиççи те организацилемен. Перепис ыйтăвĕпе пĕр пуху та ирттермен.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—перепис пункчĕсем валли çак тарана çитсе те çуртсем тупса паманни пулса тăрать. Пайанхи куна пĕр перепис пункчĕн те уйрăм çуртсем çук. Райĕçтăвком президиумĕ перепис пункчĕсем валли уйрăм çуртсем тупса пама васкамасть.

Дм. Михайлăв.

Запаслă счотчиксем

ИШЛЕЙ. Хăймалакасси йалсовечĕ 1939 çулта пулакан халăх переписне пур йенчен те лайăх хатĕрленет. Йалсоветĕнче шутлав участки тунă. Икĕ счотчик тата пĕр запаслă счетчик уйăрнă. Йалсовечĕпе колхоз активĕ хушшинче, йалсовет пленумĕнче халăх переписĕ çинчен уйрăм ыйту лартса сӳтсе-йавнă. Халĕ халăх хушшинче докладсем туса ирттереççĕ. Ку ĕçре комсомолец-учителсем Павлăв, Чубуков, Иванов йулташсем тăрăшаççĕ.

Ив. Çеменăв.

Шупашкарти аероклуб çинчен

Шупашкарти аероклуб йулашки çулсенче паллă çитĕнӳсем туса пычĕ. Вăл авиаци специалисĕсене: пилотсене, летчик-инструктăрсене, авиомотористсене хатĕрлет. Хула çынисем кашни кунах тӳпере самолйотсем вĕçнине кураççĕ. Камсем вĕçеççĕ-ха сывлăшра? Савăнăçлă пурăнакан çамрăксем, чăваш халăхĕн телейлĕ ывăл-хĕрĕсем тăшмана хирĕç тухма йаланах хатĕр пулма авиаци техникине вĕренеççĕ.

Аероклубăн ĕçĕ çуллен çул пысăкланса пырать. Аероклубра кăçал иртнĕ çулхинчен темиçе хут ытларах çамрăксем вĕренеççĕ. Анчах вĕренӳ ĕçне пӳлĕмсем çитменни пысăк чăрмав кӳрет. Вĕренекенсем нумай. Вĕренмели пӳлĕмсем мĕн пурĕ те 5 кăна. Вĕсем те пулин пĕчĕкскерсем кăна, тăвăр, вĕренме йурăхлă мар. Тепĕр пилĕк группă пӳлĕмсем çитмен пирки, çăвĕпех тулта, строителсен клубĕн сатĕнче вĕреннĕ. Халĕ тулта вĕренме май çук, çавăнпа та курсантсене ăçта кирлĕ унта куçарса çӳреме тивет.

Халăх тăшманĕ Спасăв, Халăх Комиссарĕсен Советĕнче ĕçленĕскер, аероклуб валли пӳлĕмсем тупса пама тăрăшман, çак ĕçре чăрмантарса пынă.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти майăн 15-че пулнă ларура аероклуб валли йурăхлă çурт тупса уйăрса пама виçĕ çынтан йатарласа комиççи турĕ. Комиççи председателне халăх тăшманне Матвейĕва уйăрчĕç. Комиççи хула тăрăх çуртсем шыраса çӳрерĕ. Чăн малтанах чукунçул строителстви управленин çурчĕ умĕнче чаранса тăчĕç. Вăл аероклуб валли йурăхсăр. Унтан кивĕ мунчана çитрĕç. Кивĕ çурт, аран-аран тытăнса тăрать. „Пĕр 50 пин тенкĕ укçа хывас пулать. Йусасан пит те лайăх çурт пулать", тесе мухтарĕ Матвейĕв.

Комиççи ĕçĕ çакăнпа пĕтрĕ те, урах нимĕнле сĕнӳсем те парайманрĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ аероклуба çурт тупса парас ыйтăва 1938 ç. ийунĕн 9-мĕшĕнче каллех сӳтсе-йаврĕ. Ку хутра ыйтăва пачах пĕтерсе лартрĕç: „Шупашкарти аероклуба çурт кирлине, унсăрăн вĕренӳ ĕçне тĕрĕс йĕркелеме май çуккине тата аероклуб валли Шупашкарта çурт тупма май çуккине шута илсе, ССРС Осоавиахим Тĕп Советĕнчен 1939 çулти плана Шупашкарта аероклуб тума кĕртме ыйтас", тенĕ. Аероклуба çурт тупса памарĕç, пуш халапсемпе çеç тăратса хăварчĕç.

Нумайах пулмасть хула совет председателĕ Калинкинă йулташ: „Сире валли автоклубра икĕ клас уйăрса паратпăр", тесе çырса пĕлтерчĕ. Вăл аероклубран икĕ километрта ларать. Пĕрисем хулан пĕр вĕçĕнче, теприсем—тепĕр çĕрте. Ку ĕнтĕ вĕренӳ мар, вĕренĕве чăрмантарни кăна.

Аероклуба çурт кирлĕ. Ăна сăмахпа мар, ĕçпе пулăшас пулать. ПСÇЛКС Обкомĕ тата хула комитечĕ аероклуба çурт тупса парассишĕн тăрăшмаççĕ. Летчиксене паха вĕрентмешкĕн тивĕçлĕ условисем кирлĕ. Епĕр правителствăран аероклуба çурт пама ыйтатпăр.

Аероклуб штабĕн начальникĕ
А. Андрийанăв.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Суту-илӳ ĕçне большевикла йĕркелемеле"

Васильйĕв йалкор „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине Йетĕрне рнйонĕнчи Мăн-Чурашри йалпо прикашчикĕ Михайлăв колхозниксене валли кирлĕ таварсем кӳрсе килес вырăнне час-часах ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Заметкăна Йетĕрне районĕнчи потребсойуз тĕрĕслесе тухрĕ. Çак ĕçсемшĕн А. М. Михайлăва çентăбĕрĕн 20-мĕшĕнче ĕçрен кăларнă.

„Хăçан лайăхлатаççĕ-ши?"

Шупашкарти педагогика институчĕ çумĕнчи столовăй ку вăхăтчен йапăх ĕçленĕ, студентсене тутлă мар, йе тата йӳçĕхнĕ йашка çитернĕ. Çапах та апат хакне чакарас вырăнне, ӳстерсе пынă. Обшчежитисенче пурăнакан студентсем шывсăр пурăннă.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакци заметкăри фактсене тĕрĕслесе çитменлĕхсене вырăнта пĕтерме педагогика институчĕн директăрĕ патне йанăччĕ.

Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулчĕç. Столовăйра ирсĕр ĕçсем туса пынăшăн Мандушова столовăй пуçлăхĕнчен кăларнă, ăна уголовнăй йенĕпе ответ тыттараççĕ.

Халь столовăйри апата лайăхлатнă, унăн хакне 70 пус таран йӳнетнĕ. Студентсен обшчежитине йаланах шыв турттарса тăма уйрăм çынсене çирĕплетнĕ.

„Прогульшчиксемпе вăйлăн кĕрешер"

Смирновпа Иванов йулташсем Шупашкарти тырпул хатĕрлев пунктĕнче ĕçлекенсем хушшинче ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрес, ĕçе тухмасăр прогул тăвас йăла вăйланса пыни çинчен çырса пĕлтерчĕç. Складсен пуçлăхĕ Дурнев ĕçсе çӳресе 4 кун хушши ĕçе тухман, завхоз Федарăв час-часах ӳсĕр çӳренĕ.

Çак заметкăна тĕрĕслесе тухнă хыççăн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ Д. Митков йулташ „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцине çапла пĕлтерчĕ:

— Заметкăри фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс. Складсен пуçлăхне—Дурнева ĕçрен кăларма хушнă, завхоз Федарăва хатĕрлев пункт управляйушчи хытă йатланă.

„Пырса тĕрĕслеме ыйтатпăр"

Çакăн пек заметкăра Кульушмари (Ишлей р.) пуçламĕш шкулта вĕренекенсем учител Никон Леонтйĕв ачасенчен мăшкăлани, вĕсене хĕнени çинчен çырса пĕлтерчĕç.

Çак заметкăна Шупашкар районĕнчи милици тытăмĕ тĕрĕслесе тухса, Кульушма йалĕнче вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвне туса ирттерме тата Леонтйĕва учител ĕçĕнчен кăларма районри сутĕç пайне панă.

Никон Леонтйĕва суд йенĕпе ответ тыттараççĕ.

Виçĕ паттăр-летчицăсен йачĕпе

„Ĕçхĕрарăмĕ" журналăн 11-мĕш номĕрĕ хăйсен паттăр вĕçевĕпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ виçĕ совет летчицисен—Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йулташсен йачĕпе тухать.

Журналта—хăйулă виçĕ тантăш çинчен çырнă статйасем, калавсем, сăвăсем тата ытти материалсем пулаççĕ. Кунсăр пуçне тата журналта фото-ӳкерчĕксем нумай пулаççĕ. Нойабĕр пуçламĕшĕнче журнала пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерсе пичете параççĕ.

ПĔЛТЕРНИ

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ пайан, октăбĕрĕн 23-мĕшĕнче, Шупашкар хулинчи докладчиксемпе агитатăрсене валли „Пĕтĕм Сойузри ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарни" темăпа доклад ирттерет.

Доклад парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче каçхине 7 сехетре пуçланать.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Шупашкар хула Совечĕн финанс пайĕпе финанс çекцийĕ 1938 çулти октăбĕрĕн 23-мĕшĕнче 7 сехетре каçхине, Колхозник Çуртĕнче Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕцсен депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн финанс çекцин аслă пленумне пухаççĕ.

КУН ЙĔРКИ:

1. III-мĕш квартăлти финанс планне тултарни çинчен тата кăçалхи IV-мĕш квартăлăн задачисем.

Финанс çекци членĕсен, хулари финанс активĕн, урамсенчи комитетсен членĕсен, комсодсен, ответлă инспектăрсен, финанс контроль постисен, предприйатисемпе учреждени руководителĕсемпе бухгалтĕрсен пымала.

Хула совечĕн финанс пайĕ.
Финанс çекцийĕ.

„Сойузкинопрокатăн"

Чăваш уйрăмĕ фильмсене усă курма тӳрех фильмсен складĕнчен илекен хăйĕн клийенчĕсене

ÇАКĂН ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ:

Фильмсем ыйтса паракан зайавкăсене кино кăтартнă кун кăнтăрла 12 сехетчен тăратмала. Кăнтăрла иртсен 12 сехет хыççăн панă зайавкăсем тăрăх тепĕр кунне тин фильмсем параççĕ.

Усă курма илнĕ фильмсене клийентсен, кино кăтартнă хыççăн, тепĕр кунне кăнтăрла 12 сехетчен тавăрса парас пулать. Кăнтăрла иртсен 12 сехет хыççăн тавăрса паракан фильмсене складра—çитес числара тавăрса пани вырăнне хурса йышăнаççĕ, вара уншăн прокат укçи илеççĕ.

„Сойузкинопрокатăн"
Чăваш уйрăмĕ

МОНТАЖНИЦĂ-ПРОВЕРШЧИЦĂ

ĕçне икĕ уйăхлăха вĕренме

пĕр ученицă йышăнать

Кантуртан çак адрĕспа ыйтса пĕлмеле: ул. Ленина, дом № 19.

Пуçа пăтратакан программă

Нумай пулмасть Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пур шкулсене те чăваш чĕлхи программине (редактăрĕ М. Николайĕвă) салатса пачĕ. Пĕлтер чăваш чĕлхине шкулсенче программăсăр вĕрентнĕ пирки, ку çĕнĕ программăна алла илнĕ хыççăн, чăваш чĕлхине вĕрентекен учителсем, малашне чĕлхене çирĕп программă тăрăх вĕрентетпĕр, тесе савăнчĕç.

Анчах, программăна тĕплĕн пăхса тухсассăн, унта кӳренмелисем нумай сиксе тухаççĕ. Тӳррех каласан, ку программăпа шкулсенче ĕçлеме май килмест. Мĕншĕн тесен, программăра чăваш чĕлхи çиçтемине нимĕн чухлĕ те пăхăнман; чылай тĕлсенче чăтма çук нумай пăтраштарусем пур.

Николайĕвă йулташ программăна редакциленĕ чухне пĕтĕмĕшпех чăвашсен ăслалăхпа тĕпчев институчĕ хатĕрленĕ „Чăваш орфографин тĕп правилисен" пройектне никĕсе хурса ĕçленĕ. Анчах программăна пăхса тухсассăн, ку пройект пирки ничет урлă тухса каланă шухăшсене шута илменни вулакансене питĕ аван курăнать.

Чи малтанах, урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене çырасси пирки. Ку тĕлĕшпе пройектăн 9-мĕш пайĕ тӳрех, пурне те ăнланмала çапла калать: вырăс чĕлхинчен йе вырăс чĕлхи урлă урăх чĕлхерен кĕнĕ интернационаллă сăмахсен тĕпне вырăс графикипех нимĕн улăштармасăр çыраççĕ; сăмаха вĕçлес йĕркепе йе çĕнĕ сăмах тăвас йĕркепе улăштарнă чухне чăваш морфологин саккунĕсем тăрăх улăштараççĕ, сăмахран: трактор, директор, рынок, класс т. ыт. те.

Ку шухăша пройект пирки ничет урлă тухса каланă йулташсем те чылайăшĕ ырларĕç. Çапах Николайĕвă редакциленĕ программă ку тĕлĕшпе шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентекен учителсене пăтраштарула ăнлантарусем парать. Программăра урăх чĕлхерен кĕнĕ хашпĕр сăмахсене темиçе тĕрлĕ çырни курăнать.

Акă, программа тăрăх **класс** сăмаха пĕр çĕрте **клас,** тепĕр çĕрте **класс** тесе çырмала пек тухать. Мĕншĕн тесен, программăн 4-мĕш страницине **„6-мĕш класран"** тесе çырать, 16, 19, 22, 24-мĕш страницăсенче **„класс"** тесех çырать. Кунта Николайĕвă шучĕпе 4-мĕш страницăри **„класра"** сăмах вырăн падежĕнче, кайранхи примерта кăтартнисем йат падежĕнче тесе ăнлантарасшăн пулмала. Çапах та, **класс** сăмахран, пирĕн шутпа пур падежра та хупă сасă йаланах иккĕ пулмала. Апла пулмасан, епĕр, учителсем, ачасене нихăçан та грамматикăна вĕрентсе çитерес çук.

Çавăн пекех, 12-мĕш страницăра **причастие**, **деепричастие** сăмахсене икĕ тĕрлĕ çырнă. Пĕр тĕлте **деепричастие** (сăмахра Ç мар С, астăвăр!) тесе çырнă, çавăнтах **причаçтие** (кунта тата С мар Ç иккен!) тесе çырнă. Тахăшне ĕненмеле?!.. Çапах та, **деепричастие** тата **причастие** сăмахсем хушшинче сасăсем тĕлĕшпе нимĕнле уйрăмлăх та курăнмасть.

Николайĕвă йулташăн, программăна çĕнĕ орфографи тăрăх редакцилес пулнă пулсан, мĕншĕн тата **грамматикă, фонетикă** сăмахсене пĕр çĕрте **грамматика, фонетика** (кунта тĕрĕсех ĕнтĕ!), тепĕр çĕрте **грамматикă, фонетикă** йе **фонетик** (14-мĕш стр.) тесе çырмала пулнă-ши? Ку пире паллă мар. **Подлежащее, сказуемое** сăмахсене те **подлежащи, сказуемой** тесе пăтраштарнисем программăн малтанхи страницинчен пуçласа йулашкине çитичченех пыраççĕ.

Йулашкинчен, пĕри-ик сăмах грамматикă терминĕсем пирки. Ку тĕлĕшпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пайанхи кунччĕнех учителсемпе шкул ачисен пуçне çавăрма пăрахмасть-ха.

Чăваш чĕлхинчи сăмах ушкăнĕсене пайанхи кунччĕнех çуррине (местоимение, глагол, наречие, междометие) вырăсла терминпа, ыттисене (йапала йачĕ, паллă йачĕ, хисеп йачĕ, хыççăмахсем, татăксем) чăвашла терминпа вĕрентетпĕр.

Пирĕн шутпа, ачасен пуçне пăтраштарас мар тесен, чăваш чĕлхин грамматикине вĕренни вырăс чĕлхин грамматикине те вĕренме пулăштăр тесен, терминсене çурмала пăтраштарса вĕренетессине пăрахтармалах пулать. Кун çинчен Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе ăслалăхпа тĕпчев институчĕн тĕплĕнех шухăшласа пăхмала.

Чăваш чĕлхине вĕренме учебниксем кăларнă чух çак çитменлĕхсене тĕплĕн шута илмеле.

Мих. Йурйĕв.

Уполномоченный Чувашглавлита № 548

Гор Чебоксары, типографи № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793.ф. 6. 58×84 п. л.